ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Февраль
13
эрнекун
№ 30 (8939)

35-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Совет Правительствин ноти. Совет Союзĕн Израильри Миссийĕн территорийĕнче бомба çурăлнă май Израиль правительствипе дипломатиллĕ çыхăнусем тытма пăрахасси çинчен (2 стр.).
Совет Союзĕ тăрăх (1 стр.).
И. Зеленков.—Механизаторсен ăмăртăвĕ (1 стр.).
КОММУНИСТСЕМПЕ ПАРТИРЕ ТАМАННИСЕН СТАЛИНЛА БЛОКĔН КАНДИДАЧĔСЕМ: И. Жадецкий.—Хисеплĕ машинист. А. Алексеев.—Библиотека заведующийĕ (2 стр.).
Н. Волков.—Пирвайхи çитĕнÿ (2 стр.).
Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветра. Чăваш АССР-ĕнчи промышленность, транспорт, çыхăну тата суту-илÿ предприятийĕсем 1952 çулхи IV-мĕш кварталта социализмла ăмăртăва ĕçленин итогĕсем çинчен (3 стр.).
Кино кăтартас ĕçе лайăхлатмалла (3 стр.).
Н. Минин.—Рабочисен поселокĕнче (3 стр.).
Венгрипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх (4 стр.).
Польшăри ĕççынниcем вырăс чĕлхине вĕренеççĕ (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Англире ĕççĕрлĕх ÿсет. (4 стр.).
Итали горнякĕсен çентерĕвĕ (4 стр.).

Партипе государство дисциплинине çирĕплетесси—парторганизацисен пысăк задачи

Совет халăхĕ, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, КПСС XIX-мĕш съезчĕ коммунизм обществи тăвас тĕлĕшпе палăртнă пысăк программăна пурнăçа кĕртессишĕн пĕтĕм вăй-хăвата хурса кĕрешет. Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене пурнăçлассишĕн пыракан кĕрешÿ партин ертсе пыракан пĕлтерĕшне малалла вăйлатма, хăйĕн речĕсене пĕтĕçтерсе тĕреклетме, партипе государство дисциплинине кашни парти членĕпе кандидачĕ енчен çирĕп тытса пыма хушать.

Партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Уставĕнче партипе государство дисциплини партин пур членĕсемшĕн те обязательно пулса тăрать, тесе кăтартса панă. Партире икĕ дисциплина—пĕри руководительсемшĕн, тепри рядовой членсемшĕн—пулма пултараймасть. Партин пур коммунистсемшĕн те,—вĕсен тава тивĕçлĕ ĕçĕпе вĕсем мĕнле вырăнта ĕçленине пăхмасăр,—пĕр дисциплина, пĕр закон. Партипе государство дисциплинине пăсни питĕх те киревсĕр ĕç пулса тăрать, партие сиен кÿрет, çавăнпа та дисциплинăна пăсакансем парти ретĕнче пулма тивĕçлĕ мар. Çакă положени—Устава кĕнĕ, парти законĕ пулса тăнă положени пирĕн мĕнпур ĕçсемшĕн, коммунистсене, уйрăмах ертсе пыракан кадрсене тĕрĕс воспитани парас ĕçсемшĕн уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Коммунистсен партийĕ организациллĕ ĕçсене—кадрсене суйласа илес, хушнă ĕçсене пурнăçланине тĕрĕслес ĕçсене пысăк вырăна хурать. Пирĕн парти государство, хуçалăх, культура строительствин мĕнпур облаçĕсенче нумай йышлă кадрсем ÿстерсе çитĕнтерчĕ. Парти пăхса ÿстернĕ нумай йышлă кадрсем тÿрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлеççĕ, хăйсен обязанноçĕсене чыслă пурнăçлаççĕ. Пирĕн кадрсем социализмлă Тăван çĕршыв ĕçне чĕререн парăнса тăваççĕ, вĕсем государство интересĕсене тимлĕн сыхласа тăраççĕ, партипе государство дисциплинине çирĕп тытса пыраççĕ.

Çакăнпа пĕрлех пирĕн республикăра ку тĕлĕшпе ĕçсем пур енчен те лайăх тăраççĕ теме çук-ха. Хăшпĕр работниксем партипе государство дисциплинине тĕрĕс мар ăнланнă пирки çак дисциплинăна шута илме пăрахнă, вĕсем дисциплинăна пăсас çул çине тăраççĕ, ведомствăллă тата вырăнти интерессене мала хураççĕ, юлашкинчен—ĕçе путлантарса лартаççĕ, çапла вара государство интересĕсене пысăк сиен кÿреççĕ. Пирĕн хушăра хăйсене хушса панă ĕçсемшĕн ответлăха туйман работниксем те пур-ха. Вĕсем партипе правительство решенийĕсем çине çиелтен пăхаççĕ. вĕсене пурнăçа кĕртессишĕн активлă кĕрешмеççĕ, вăл е ку участокра ĕçсем йĕркеллĕ пыманни çине чунсăррăн цăхаççĕ, çĕршыв интересĕсене сиен кÿрекен фактсемпе килĕшсе тăраççĕ. Çавăн пек. «Чăвашвăрман» тресчĕн Йĕпреç вăрманпромхоз директорĕ Я. М. Цветков юлташ хăйне шанса панă государство предприятийĕнчен хăйĕн вотчини туса хунă, кадрсем суйласа илес тĕлĕшпе парти кăтартса панă тĕп принципа пăснă, вĕсене туслă пулнипе, пĕр-пĕрне килĕштернипе, пĕр вырăнти çынсем пулнипе ĕçе илнĕ. Хăйĕн ĕç вырăнĕпе усă курса, вăл кашни çул хăйĕн хуçалăхĕ валли тÿлевсĕр утă илсе тăнă, отчетсенче предприяти ĕçĕсене лайăхлатса кăтартнă. Вăрман хатĕрлемелли плана вăрманпромхоз 1952 çулта 80 процент кăна тултарнă. Çакăн пек начар ĕçленине вăрманпромхоз 1952 çулта государствăна 827 пин тенкĕлĕх убыток кÿнĕ.

Вăрманпромхозра партипе государство дисциплинине çакăн пек пăсасси КПСС Йĕпреç райкомĕпе унăн пĕрремĕш секретарĕ Багров юлташ ĕç çине либералла, килĕшсе пăхнипе пулма пултарнă, вĕсем Цветков юлташа вăхăтра тÿрлетмен, ăна йĕркене кĕртмен, çапла вара вăрманпромхозра законсăр ĕçсем тума май панă.

Партипе государство дисциплинине пăсасси, пуринчен ытла, парти организацийĕ дисциплинăна тĕреклетесси çине кирлĕ пек пăхман чухне, кадрсене çитменлĕхсем тĕлĕшĕнчен килĕшмесĕр тăма воспитани паман чухне пулать.

Парти членĕшĕн парти решенийĕсемпе килĕшни кăна çителĕксĕр. Парти Уставĕ коммунистсене çак решенисене пурнăça кĕртессишĕн активлă кĕрешме хушать. Анчах та, шел пулсан та, парти организацийĕсенче парти решенийĕсене çăмахпа йышăннă вăхăтрах, ĕçре вĕсене пурнăçламан çынсем те сайра хутра мар тĕл пулаççĕ.

Парти Уставĕ парти хушнă ирек мĕнле ĕçре те кадрсене вĕсен политикăллă тата ĕçлĕ пахалăхне курă тĕрĕс суйласа илесси çинчен парти кăтартса панисене пурнăça çирĕп кĕртсе пыма хушать. Çак кăтартусене чылай чухне пурнăçламаççĕ, уйрăм руководительсем работниксене туслă пулнипе, пĕр-пĕрне килĕштернипе, пĕр вырăнти çынсем тата тăван-хурăнташсем пулнипе ĕçе илеççĕ. Çавăн пек работниксем йăнăшсем тусан е ĕçе путлантарса лартсан, руководительсем вĕсене хÿтĕлесе пăрахса каçарма пăхаççĕ.

Партипе государство дисциплинине сĕмсĕррĕн пăснине кăтартакан паллăсенчен пĕри вăл—хăшпĕр работниксем хăйсене пăхăнса тăракан предприятире е учреждении ĕçсем мĕнле тăнине тĕрĕс мар кăтартни, туман ĕçсене тунă тесе ултавлани пулать.

Парти хăйĕн речĕсенче ултавçăсене тытса тăма пултараймасть, мĕншĕн тесен вĕсем халăх енчен партие шанса тăрассине хавшатаççĕ, коммунистсене мораль тĕлĕшĕнчен пăсаççĕ. Партипе государствăна улталанине, чăнлăха пытарса хăварма тăнине парти умĕнче пысăк преступлени туни пулать, тесе шутламалла. Парти организацийĕсен çитменлĕхсене хăюллăн уçса палăртмалла, законсăр ĕçсем патĕнчен иртсе каймалла мар, работниксене парти умĕнче тĕрĕс те тÿрĕ пулма, государство интересĕсемшĕн куллен тăрăшма вĕрентмелле.

Парти организацийĕсен кашни работник мĕнле ĕçленине лайăх пĕлсе тăмалла, партипе государство дисциплинине пăсма памалла мар, партилĕхе пăсма пăхакан, парти организацийĕ çине таянмасăр ĕçлекен, массăсен сассине итлемен, аялтан килекен критикăна шута илмен руководительсене вăхăтра итлеттермелле.

Партипе государство дисциплинине тытса пырас тени вăл—критикăпа самокритикăна пур майсемпе те вăйлатас, критикăна хĕсме пăхнине хирĕç хаяррăн кĕрешес тенине пĕлтерет. Критикăна хĕсни, ăна путарса лартни парти массисен пултарулăхне пĕтерет, руководство авторитетне сухатать, йăнăшсемпе çитменлĕхсене пытарса хăварма, шăлса лартма май парать.

Критикăпа самокритикăна вăйлатас ĕçре ĕççыннисен сырăвĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсем пур йышши çитменлĕхсене те вăхăтра палăртса, çитменлĕхсем çинчен ертсе пыракан органсене пĕлтерсе, бюрократсемпе чиновниксене, жуликсемпе ăнсăртран килсе тухнă çынсене, пирĕн государство аппаратĕн уйрăм сыпăкĕсенче пытанса ĕçлекен ирсĕрсене тăрă шыв çине кăларма пулăшаççĕ.

Вырăнсенчен килекен сигналсем тăрăх çийĕнчех тивĕçлĕ мерăсем йышăнни, ĕçри çитменлĕхсене татăклăн пĕтерни массăсен активлăхне хăпартать, дисциплинăна тĕреклетме пулăшать. Тепĕр майлă та—çак ĕçри формализм, волокита массăсен активлăхне пĕтерсе лартать, дисциплинăна хавшатать.

Коммунист ирек хăш участокра тата ирек мĕнле лару-тăрура ĕçлет пулсан та, унăн политикăллă сыхăлăх малти вырăнта тăмалла. Партипе совет работникĕсен пурин те, парти членĕсен пурин те партипе государство вăрттăнлăхне тимлĕн тытса пымалла. Капитализмлă йĕритавралăх тытăнса тăни çинчен, социализмлă государство тăшманĕсем пирĕн çĕршыва сăтăрла ĕçсем тума хăйсен агенчĕсене яма тăрăшни çинчен яланах асра тытмалла.

Дисциплинăна тĕреклетес ĕçре хушнă ĕçсене пурнăçланине тĕрĕслесси пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл çитменлĕхсене уçса палăртма, йышăннă решенисене пурнăçлама, ĕçри лайăх опыта вĕренме май парать. Парти пухăвĕсенче, райкомсемпе хула комитечĕсен пленумĕсенче час-часах йышăннă решенисене пурнăçлани çинчен отчетсем итлемелле. Коммунистсем хăйсем панă практикăллă сĕнÿсем пурнăça мĕнле кĕрсе пынине пĕлсе тăччăр.

Коммунизм обществи тумалли пĕтĕм тĕнчипе историллĕ задачăсене ăнăçлă татса парасси партипе государство дисциплинине çирĕплетессипе уйрăлми таччăн çыхăнса тăрать. Коммунистсене, кадрсене совет законĕсене пĕр пăркаланмасăр пурнăçлама, хушнă ĕçсемшĕн ответлă пулма воспитани памалла.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсене пурнăçлассишĕн кĕрешсе çĕнĕ çитĕнÿсем тăвасси çакăнтан килет те ĕнтĕ.

Энгельс хулинчи пир-авăр комбиначĕ

ЭНГЕЛЬС (Саратов облаçĕ), февралĕн 11-мĕшĕ (ТАСС). Энгельс хули хĕрринче, çĕçенхир пуçланакан вырăнта, пир-авăр комбиначĕ тума тытăнаççĕ. Халĕ кунта нумай хваттерлĕ пурăнмалли çуртсем, шлакоблоксем тăвакан завод, механически мастерской, складсем тăваççĕ, бетон çăрса хатĕрлекен завод, тимĕрбетон япаласем тата йывăç япаласем тăвакан заводсем туса пĕтереççĕ.

Энгельс хулинчи пир-авăр комбиначĕ пирĕн çĕршыври чи пысăк комбинатсенчен пĕри пулать. Комбинатри 5 фабрикăра пысăк тухăçлăхпа ĕçлекен çĕнĕ машинăсем вырнаçтарса лартаççĕ.

Совет Союзĕ тăрăх

Атăл хĕрринчи çĕнĕ хула

ВОЛЖСКИ ПОСЕЛОКĔ (Сталинград облаçĕ), февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Атăлăн сулахай хĕрринче, Сталинградран тăвахра, Атăл леш енчи вĕçĕ-хĕррисĕр çеçенхир пуçланнă вырăнта, Волжски поселок ÿсет. Ку вăл Сталинград гидроэлектростанцине тăвакансен хули пулать. Халĕ поселок темиçе тăваткал километр лаптăк йышăнать. Чул çуртсем лартнă тÿрĕ урамсем Осаднăй Балка хутортан кăнтăр еннелле, Ахтуба юханшывĕн хĕррипе Тури Ахтуба хутор патне çитиччен тăсăлаççĕ. Çак çамрăк хулара хваттерсемпе административлă учрежденисем валли 150 çурт ытла тăваççĕ. Вăл шутра—культура дворецĕ, больница хули тата ытти сем те пур.

Строительсем çуртсене индустриллĕ меслетпе тума тытăнаççĕ. Çуртсен тĕп пайĕсене поток йĕркипе тумалли майсене палăртса хунă. Тимĕр-бетонран пысăк кирпĕчсем тата плитасем, гипсран тĕрлĕ япаласем туса кăларакан предприятисем ĕçлеççĕ. Типĕ штукатурка туса кăларассине йĕркелеççĕ, йывăçа хăварт типĕтмелли аппаратсем хатĕрлеççĕ.

Пурăнмалли çуртсене икĕ хут хăвăртрах тума пуçлаççĕ.

Украина—аслă стройкăсене

КИЕВ. «Ленинская кузница» завод коллективĕ Туркменири тĕп канал строителĕсем валли баржа пайĕсем срокчен туса панă. Çулталăк пуçланнăранпа Аму-Дарья çинчи аслă стройка валли баржа пайĕсем нумай вагонсем çине тиесе ăсатнă.

Халĕ хулари предприятисенче Туркменири тĕп канал валли баржăсем çине вырнаçтарса лартмалли электростанцисем васкаса тăваççĕ. Çав электростанцисен çĕр чавакан снарядсем валли электроэнерги парса тăмалла пулать.

Донбасри промышленность аслă стройкăсем валли продукци туса кăларассине ÿстерсех пырать. Çĕнĕ çул пуçланнăранпа кунти заводсем аслă стройкăсене темиçе пин тонна прокат, çĕр чавмалли машинăсем валли запаслă пайсем, цемент, изоляторсем тата ытти япаласем нумай ярса панă.

ХАРЬКОВ. Молотов ячĕпе тăракан станоксем тăвакан завод «Сталинградгидростроя» хăватлă шлифовальнăй станок ярса панă. Заводри специалистсен конструкцийĕ тăрăх тунă çав агрегат пысăк тухăçлăхпа ĕçлет, ăна ĕçлеттерме питĕ çăмăл тата вăл детальсене питĕ лайăх туса хатĕрлет.

Завод коллективĕ кăçалхи çул Атăл çинчи çĕнĕ стройкăсен икĕ заказне срокчен туса панă. Вăл Каховкăри гидроэлектростанцие тăвакансем валли те срокчен ултă эрне малтан станок туса пĕтернĕ.

Халĕ заводра Куйбышеври гидроузел строительстви валли тепĕр ушкăн çĕнĕ станоксем тума пуçланă.

Февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС).

Гектартан 360 пăт тулă

КАЛИНИНГРАД, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Калининград селекци станцийĕнче В. И. Погребец юлташ ертсе пыракан бригада 5 гектарлă сăнав уйĕнче кашни гектартан кĕрхи тулă 315-шер пăт туса илнĕ. Кунти вырăнсенче çакăн пек пысăк тухăçлă тырпул туса илни халиччен пулман.

В. И. Погребец юлташ бригади сăнавсем тума 1950 çулта тытăннă. Çав çулхине сĕлĕ вырса илнĕ хыççăн хăмăла сухаласа пăрахнă. Сентябрь уйăхĕн варринче хура çĕртме сухи тунă, ун чухне тăпран сухалакан сийне 3—4 сантиметр тарăнлатнă. 1951 çулта çуркунне дисклă сÿресемпе икĕ хут сÿреленĕ, май уйăхĕнче кашни гектар пуçне 20-шер тонна удобрени кăларнă. Çу каçиччен пĕтĕм участока ултă хутчен сÿреленĕ. Лайăх сухаланă тата пирчентернĕ çĕр çине сентябрĕн 15-мĕшĕнче «Калининградская белая» сорт тулă акса хăварнă. Вăрлăх кашни гектар пуçне 210 килограмм кĕнĕ. 1952 çулта çуркунне тулă калчине азотлă-калиллĕ удобренипе икĕ хут апат панă, пĕтĕм участокри калчана пĕр хут сÿреленĕ.

Çакăн пек тăрăшса ĕçленĕ май тулă вăйлă ÿснĕ. Ытти участоксенчипе танлаштарсан, тулă виçĕ хут тухăçлăрах пулнă. Погребец юлташ ертсе пыракан бригадăри работниксем кăçал тата пысăкрах тухăçлă тулă ÿстерме—кашни гектартан 360 пăт тулă туса илме пулнă. Халĕ Погребец юлташ бригади иртнĕ çулхинчен икĕ хут пысăкрах участок çинче ĕçлет.

„Серго" танкер рейсĕ

ОДЕССА, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Одесса портне Антарктикăран «Серго» танкер таврăннă. Танкер халĕ Антарктикăри тинĕссенче китсем тытса çÿрекен «Слава» флотили валли горючи, апат-çимĕç илсе кайнă, унтан кит тытакансем пухса хатĕрленĕ кит çăвне илсе килнĕ. Грузсене тинĕсре питĕ вăйлă çил-тăвăл пулнă вăхăтра пушатса тиеме тивнĕ. Моряксем тата кит тытакансем тăрăшса ĕçлени, вĕсем иртнĕ рейссенче пысăк опыт пухни мĕнпур йывăрлăхсене çĕнме май панă. Тиес тата пушатас ĕçе кăнтăрла кăна мар, çĕрле те прожекторсен çуттинче туса пынă.

Портра ĕçлекенсем танкер çинчи çăва чугун çул цистернисем çине пушатма тытăннă. Ана çĕршыври заводсене илсе каяççĕ. (ТАСС).

Узбекистанра çуртри акаççĕ

ТАШКЕНТ, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Узбекистанăн кăнтăр пайĕнчи колхозсем хыççăн республикăн çурçĕр енчи тата сăрт-тулă районсенчи ялхуçалăх артелĕсем те çуртри акма тытăннă. Тĕштырă акса тăвакан пысăк районсенчен пĕрринче—Хавастски районĕнче çураки ĕçе вăйланса пырать. Унти колхозсенчен çурри ытла тулăпа урпа акаççĕ.

Пур çĕрте те механизмсемпе анлăн усă кураççĕ. Паркентски МТС-ĕнчи механизаторсем тĕштырăсене 12 кун хушшинче акса пĕтерме пулнă.

Ростов облаçĕ. Семикаракорски районĕнчи Мечетновкăра электромашина-трактор станцийĕ тăваççĕ. Облаçри çак пĕрремĕш электромашина-трактор станцине Главсельэлектрон Константиновски кантурĕн коллективĕ тăвать.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Мечетновкăри электромашина-трактор станцийĕнче подстанци тăваççĕ.

Л. ПОРТЕР фотоÿкерчĕкĕ. (ТАСС фотохроники).

ХИСЕП ХĂМИ

«Чăвашвăрман» трест тата ĕççынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсемпе КПСС райкомĕсем тăратнă тăрăх республикăри Хисеп хăми çине çак колхозсене кĕртнĕ:

КУСЛАВККА РАЙОНĔ ТĂРĂХ

18. «Динамо» колхоз (председателĕ К. Иванов юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ М. Коньков юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ П. Николаев юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 103,1 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 108,2 процент, турттарса кăлармалли плана 101,3 процент тултарнă.

ШĂМĂРШĂ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

19. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ В. Падюков юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ Н. Амосов юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ Н. Кондратьев юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 103,5 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 101,6 процент, турттарса кăлармалли плана 102,6 процент тултарнă.

20. Жданов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ П. Н. Васильев юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ В. Копчиков юлташ, вăрман хатĕрлекен бригадăн бригадирĕ П. В. Васильев юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 100,8 процент, каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли плана 100 процент, турттарса кăлармалли плана 104,4 процент тултарнă.

ÇĔМĔРЛЕ РАЙОНĔ ТĂРĂХ

21. Сталин ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ И. Кузьмин юлташ, пуçламăш парторганизаци секретарĕ Е. Ванифатов юлташ). Колхоз йывăç касса хатĕрлемелли тата çул хĕррине илсе тухмалли плана срокчен тултарнă.

КĔРКУННЕПЕ ХĔЛЛЕХИ ВĂХĂТРА ВĂРМАН ХАТĔРЛЕМЕЛЛИ ПЛАНА «ЧĂВАШВĂРМАН» ТРЕСТ ЕНЕПЕ 1953 ÇУЛХИ ФЕВРАЛĔН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (процентпа)

Районсем	Касса хатĕрлени	Çул хĕррине илсе тухни	Турттарса кăларни
Улатăр	42,4	51,6	43,5
Элĕк	46,1	37,9	28,2
Вăрнар	47,1	40,9	50,5
Йĕпреç	40,1	21,2	25,0
Ишлей	—	—	50,6
Калинино	42,3	51,7	40,5
Канаш	51,9	24,6	28,8
Комсомольски	91,9	46,2	72,2
Куславкка	114,0	72,7	105,9
Красноармейски	38,2	6,2	29,7
Хĕрлĕ Чутай	51,7	20,2	—
Кувакино	40,6	21,8	42,0
Сĕнтĕрвăрри	81,1	62,2	—
Муркаш	81,2	70,9	—
Октябрьски	82,7	71,5	48,2
Первомайски	74,4	40,0	41,3
Пăрачкав	60,5	64,2	17,2
Советски	41,3	64,6	17,6
Сĕнтĕр	—	28,3	—
Вăрмар	62,4	15,9	45,7
Çĕрпÿ	30,8	10,7	37,9
Шупашкар	136,6	123,8	122,6
Чкаловски	97,5	52,9	43,7
Чурачăк	58,1	35,8	78,7
Шăмăршă	61,8	18,1	62,0
Шăхасан	56,1	29,1	33,8
Çĕмĕрле	68,5	80,1	101,5
Етĕрне	—	19,1	36,8
Елчĕк	27,2	85,1	31,2
Тăвай	41,9	12,4	30,8

Плана пур колхозсен те тултармалла

ЧУРАЧĂК. «Слава», «Труд», Сталин ячĕпе тăракан, «Красный самолет» колхозсем вăрман хатĕрлемелли плана йышăннă срокра тултарчĕç. «Совет», «Родина», «Красный флот», Малти Анташри Ленин ячĕпе тата Калинин ячĕпе тăракан колхозсем те вăрманта лайăх ĕçлеççĕ.

Анчах район пĕтĕмĕшпе илсен юлса пырать. Çакă вăл уйрăм колхозсен руководителĕсем ответлăх туйманнинчен килет. Шуркассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз йывăç касса хатĕрлемелли плана 11,2 процент, турттарса кăлармалли плана 13 процент çеç тултарнă, çул хĕррине илсе тухма тытăнман та. «Динамо» колхоз та юлса пырать. Колхоз председателĕ Васильев юлташ эрни-эрнипех ĕçкĕ тăрăх çÿрет, правлени çуртне пырса та курмасть.

«Прогресс» колхоз председателĕ Степанов юлташ вăрман хатĕрлекен колхозниксем валли апат-çимĕç, лашасем валли утă-улăм вăхăтра леçтерсе пама тăрăшмасть. Çавăнпа колхозниксем вăхăт çитмесĕрех киле таврăнаççĕ. Райсовет исполкомĕпе КПСС райкомĕ государство заданине пурнăçлама тăрăшман руководительсен ответлăхне ÿстермеççĕ. Вăрман хатĕрлемелли плана пур колхозсен те тултармалла.

Вăрман хатĕрлес ĕçре татăклă улшăну тумалла. Вырăнти Советсен суйлавĕ ячĕпе колхозниксем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн сарас пулать.

А. СЕМЕНОВ.

Механизаторсен ăмăртăвĕ

КИРЕ, февралĕн 12-мĕшĕ. (Телефонпа). Çак кунсенче «Чăвашвăрман» треста пăхăнса тăракан вăрманпромхоз коллективĕн пĕрлехи пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху «Лесная промышленность» хаçат малта пыракансен опытне сарас тĕлĕшпе ятарласа пичетленĕ умстатьяна сÿтсе яврĕ.

Рабочисем, инженерсемпе техниксем производствăра усă курман резервсене, ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулăшакан, механизмсемпе туллинрех усă курма пулăшакан майсене палăртрĕç. Пуху кăçал ĕç тухăçлăхне 10 процент ÿстерме, продукцин хăйне ларакан хакне пĕр процент чакарма, 100 пин тенкĕ перекетлеме йышăнчĕ. Механизаторсем кашни тракторпа çулталăкра 6 пин кубометр йывăç çул хĕррине илсе тухма, кашни электростанци пуçне 14.500 кубометр йывăç касса хатĕрлеме, кашни автокранпа 28 пин кубометр тиесе пушатма сăмах пачĕç.

Коллектив çулталăкри плана срокчен тултарма, Тăван çĕршыва планран иртгерсе пиншер кубометр йывăç хатĕрлесе пама, пĕрремĕш кварталта вăрман турттарса кăлармалли плана мартăн 25-мĕшĕ тĕлне тултарма пулса социализмлă обязательство йышăнчĕ, Улатăр вăрманпромхозне ăмăртăва чĕнчĕ.

Çак уйăхра çанталăк сивĕ тăрать. Çапах та ĕç хăвăртлăхĕ чакмасть. Юлашки кунсенче уйрăм стахановецсем халиччен пулман рекорд тăрĕç. Февралĕн 11-мĕшĕнче Чăваш АССР Верховнăй Совет депутачĕ, паллă стахановец М. Сысуйкин юлташ 120 кубометр йывăç çул хĕррине илсе тухса, сменăри нормăна 200 процент тултарчĕ. М. Сысуйкин юлташран стахановла ĕçлеме вĕреннĕ Лачин тракторист та паха тĕслĕхсем кăтартать, ĕç нормине тăтăшах иртгерсе тултарать. Вăл çулталăкри нормăна 150 процентран кая мар тултарма сăмах пачĕ.

Вырăнти Советсен суйлавĕ ячĕпе ăмăртăва хутшăнса, механизаторсем ĕç тухăçлăхне чылай ÿстерчĕç. Трактористсем пурте пекех ĕç нормине тултараççĕ тата иртгерсе тултараççĕ.

1952 çулхи III-мĕш кварталта социализмлă ăмăртса ĕçленин итогĕсем тăрăх, СССР Вăрман промышленность министерстви Панчугин юлташа чи лайăх шофер ятне панă. Вăл халĕ те пысăк тухăçлăхпа ĕçлет, норма тăрăх сменăра 18 кубометр турттарса кăлармалла пулсан, 25—26-шар кубометр турттарса кăларать. Городецкий, Сержантов тата ытти шоферсем те нормăна тăтăшах иртгерсе тултараççĕ.

Кадрти рабочисен примерĕпе чылай колхозниксем ĕçре паха тĕслĕх кăтартаççĕ. Куславкка районĕнчен килнĕ колхозниксем йывăç касса хатĕрлемелли тата турттарса кăлармалли плана иртгерсе тултарчĕç. Каснă йывăçа çул хĕррине илсе тухмалли задание те çитес кунсенче пурнăçлаççĕ. Уйрăмах Шăхасан районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри Лаврентьев шофер тăрăшса ĕçленине палăртас пулать. Колхоза 10 километртан 1.050 кубометр турттарса кăларма задани панă. Лаврентьев юлташ çакăн чухлĕ йывăçа пĕр автомашинăпа турттарса кăларма пулнă. Кадрти шоферсемпе ăмăртса ĕçлесе, вăл нормăна куллен иртгерсе тултарать. Вăл 850 кубометр турттарса кăларчĕ, ыттине çак уйăхра турттарса парать. Виçĕ уйăхра Лаврентьев юлташ 4 пин тенкĕ ытла ĕçлесе илчĕ.

Çак кунсенче вăрманпромхоз график тăрăх ĕçлет. Анчах пирĕн ĕçре çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Тракторсемпе электростанцисене икĕ смена ĕçлеттерессине йĕркелемен, чылай рабочисемпе колхозниксем нормăна тултарса пыраймаççĕ, хăшпĕр мастерсем малта пыракансен опытне сарма тăрăшмаççĕ. Парторганизаципе дирекци çак çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме тăрăшаççĕ.

И. ЗЕЛЕНКОВ,
Кире вăрманпромхоз директорĕ.

Коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсем

Александра Ивановна
ОРЕШКИНА, —
пир-авăр фабрикинчи ткачиха, 80-мĕш округ тăрăх Еççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидат.

Хисеплĕ машинист

Григорий Васильевич Васильев 40 çул хушши ĕнтĕ чугун çул транспортĕнче ĕçлет. Пăравус деповĕнче ăна пурте хисеплеççĕ, унăн паха опычĕпе тата меслечĕпе усă кураççĕ. 33 çул пĕр депора ĕçлесе, вăл вуншар çамрăка ăста машинист пулма вĕрентнĕ.

Григорий Васильевич 67 султа. Нумай çул тăрăшса ĕçленĕшĕн ăна государство уйăхра 440 тенкĕ пособи парать. Кунсăр пуçне, вăл уйăхра 330-шар тенкĕ пенси илет. Çапах та Васильев юлташ ĕçлеме пăрахмасть. Вăл маневр тăвакан пăравусра ĕçлет.

Григорий Васильевич пăравуса лайăх пăхса усрать, пур ĕçе те пысăк пахалăхпа тăвать, çĕр кăмрăкĕ нумай перекетлет.

Партипе правительство Васильев юлташ ĕçне пысăка хурса хакланă. Ленин орденĕ, Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ, темиçе медаль тата значоксем илемлетеççĕ унăн кăкăрне.

Григорий Васильевич яланах обществăллă ĕçе активлă хутшăннă. Еççыннисем ăна темиçе хутчен те Канаш хула Советне депутата, халăх сучĕн заседательне суйланă, темиçе хут вăл участокри суйлав комиссийĕн председателĕ пулнă. Кирек мĕнле ĕçре те вăл халăх шанăçне тÿрре кăларнă.

Депо коллективĕ, пĕр шухăш-кăмăллă пулса, Канаш хула Советне депутата суйлама Григорий Васильевич Васильев юлташ кандидатурине тăратрĕ.

Васильев юлташ час-часах суйлавçăсемпе калаçать, вĕсене ĕçре, пурнăçра тĕл пулакан йывăрлăхсемпе чăрмавсене пĕтерме пулăшать. Ĕçрен пушă вăхăтра ăна хĕрлĕ кĕтесре, общежитисенче курма пулать. Вăл çамрăксене патша саманинчи йывăр пурнăç çинчен, рабочисем самодержавине, капиталистсене хирĕç мĕнле кĕрешни çинчен каласа парать.

— Пире патша саманинче çын вырăнне хумастчĕç. Тар юхтарса ĕçлесен те çемьене тăрантармалăх ĕç укçи илейместĕмĕр. Эпĕ вăтă аттепе тата аннепе чылайччен кивĕ вагонта пурăнтăм. Совет влаçĕ çеç пире, рабочисене, тата мĕнпур ĕççыннисене телейлĕ пурнăç туса пачĕ. Хамах илес. Пенсипе пособисĕр пуçне, эпĕ уйăхра 1.500—2.000 тенкĕ ĕçлесе илетĕп. Хваттер лайăх, виçĕ пÿлĕм. Ачасем пурте аслă шкултан вĕренсе тухнă. Пĕри—геолог, тепри—инженер, виççĕмĕшĕ учитель. Сталинла саманара пурăннăçсем пурăнас тата ĕçлес килет. Пирĕншĕн тăван атте пек тăрăшнăшăн Иосиф Виссарионович Сталина чун-чĕререн тав тăватăп,—тет Васильев юлташ.

Григорий Васильевич партире тăмасть. Вăл Ленин—Сталин партине чун-чĕререн парăннă, хĕрÿллĕ совет патриочĕ. Канаш хулинчи 26-мĕш суйлав округĕнчи суйлавçăсем пурте хăйсен сассисене Григорий Васильевич Васильев юлташăн парасса шанатпăр.

И. ЖАДЕЦКИЙ.

Ксения Васильевна
ВАСИЛЬЕВА, —
кирпĕч заводĕнчи работница, 9-мĕш округ тăрăх Еççынни депутачĕсен Шупашкар хула Советне депутата суйлама регистрациленĕ кандидат.

Пултарулă бригадир

СĔМЕРЛЕ. Хула Советне депутата суйлама кандидат тăратмалли пухура сĕтел-пукан комбинатĕнче ĕçлекенсем Нина Михайлова комсомолка ятне асăнчĕç, пĕр кăмăллă пулса, ăна кандидата тăратма йышăнчĕç.

Вăрçă хыççăн Нина Михайлова Çĕмĕрлери комбината, чĕртавар хатĕрленĕ çĕрте ĕçлеме кĕрет. Вăл хăйĕн ĕçне хăвăрт вĕренсе çитет, нормăна 130—180 процент таран тултарса пырать. Производствăра тимлĕн ĕçленине кура, ăна бракер-приемщик пулса ĕçлеме куçараççĕ. Ку ĕçре те вăл хăйĕн пултарулăхне кăтартать.

Производствăра хастарлă ĕçленипе пĕр вăхăтрах, Нина Михайлова обществăллă ĕçе активлă хутшăнать. Агитатор пулса ĕçлесе, вăл рабочисем хушшинче çĕршыври тата пĕтĕм тĕнчери пурнăç çинчен ăнлантарать. Вăл ĕçленĕ иккĕмĕш цехра малтан комсомол организацийĕ пулман, вăл пуçарнипе унта комсомолăн пуçламăш организацийĕ тунă. Ку организаци кунтан-кун ÿссе пырать.

Тăрăшса тата тÿрĕ кăмăлпа ĕçлекенсене пирĕн çĕршывра юратаççĕ. Комбинатра ĕçлекенсем те, уйрăмах çамрăксемпе комсомолецсем, Михайлова юлташа хисеплеççĕ. Ăна комсомолăн комбинатри комитечĕн членне, ВЛКСМ райкомĕн членне суйлаççĕ.

Пĕлтĕр Михайлова юлташа виççĕмĕш цеха, заготовка-детальсем йышăннă çĕрте ĕçлекенсен бригадирĕ пулса ĕçлеме куçарчĕç. Кунта та вăл ĕçе хăвăрт хăнăхса çитрĕ. Унăн бригади яланах пĕр тикĕс ĕçлет, цех валли заготовкăсене тăтăшах çителĕклĕ парса тăрать.

Производствăри стахановка тата активлă общественница Михайлова юлташ хăйĕн политикăллă пĕлĕвне ÿстерме тăрăшать.

Пирĕн суйлавçăсем февралĕн 22-мĕшĕнче ленинла комсомолăн шанчăклă хĕрĕшĕн, коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕшĕн Михайлова юлташăн пĕр шухăшлă пулса сасăлассине шанса тăратăп.

В. МЫТИКОВ,
довереннăй.

Библиотека заведующийĕ

КУКЕÇ. Районти библиотекăна çынсем тăтăшах пырса тăраççĕ. Пĕрисем кунта çĕнĕ хаçатсем, журналсем вулаççĕ, теприсем вуласа тухнă кĕнекесене парса, урăх кĕнекесем илеççĕ. Библиотека заведующийĕ Екатерина Артемьевна Артемьева пурне те ăшă кăмăлпа кĕтсе илет, пурин ыйтăвĕсене те кирлĕ пек татса пама тăрăшать.

... Библиотекăна трактор бригадин бригадирĕ Л. Сергеев юлташ пычĕ. Вăл «ДТ-54» маркăллă трактор çинчен çырнă кĕнеке тупса пама ыйтать. Кирлĕ кĕнекене ăна часах тупса параççĕ. Буденный ячĕпе тăракан ялхуçалăх артелĕн членĕ В. Уткин юлташ библиотекăран радиопа электричество техники çинчен калакан çĕнĕ кĕнекесем илсе вуласшăн. Вăл библиотекарь хурса панă кĕнекесене суйлать. Артемьевăпа Уткин пĕр-пĕрне тахçантанпах пĕлеççĕ. Мĕншĕн тесен Уткин юлташ 1938 çултанпах библиотекăран кĕнекесем нумай илсе вулать. Артемьева юлташ вара ку библиотекăра çирĕм çул ĕçлет. Библиотекăри кĕнекесене вуласа, Уткин юлташ хăй тĕллĕнех электротехникăна вĕреннĕ, тăван колхозĕнче радиоузел тунă.

Артемьева юлташ панă канашсем тăрăх библиотекăри кĕнекесене вуласа паха пĕлÿ илнĕ çынсем районта сахал мар.

Крупская ячĕпе тăракан колхоз членĕ И. Мокин юлташ çамрăкранпах сад ĕçĕпе интересленнĕ. Библиотекăран сад ĕрчетесси çинчен çырнă кĕнекесем илсе вулани ăна ĕçре нумай пулăшнă. Вăл тăрăшнипе темиçе çул каялла колхозра улма-çырла сачĕ тунă. Садри çимĕç йывăççисем пурте мичуринла сорт.

Вулакансем Артемьева юлташа хисеплеççĕ. Ку ĕнтĕ халăх унăн ĕçне ырланине пĕлтерет.

Екатерина Артемьевăна библиотека заведующийĕ пулса ĕçлеме лартнă вăхăтра районти библиотека тесе Культура çуртĕнчи пĕр пĕчĕк шкафа каланă. Унта пурĕ те çĕр кĕнеке яхăн пулнă. Кĕнеке сахал пулни тата библиотекăн хăйне уйрăм çурт е пÿлĕм пулманни вулакансемпе ĕçлеме нумай чăрмантарнă. Библиотекарь çапах та алла усса ларман. Вăл библиотека ĕçне пур майсемпе те лайăхлатма тăрăшнă, çĕнĕ кĕнекесем нумай туяннă. Лайăх кĕнекесене çывăхри ялсенче килĕрен валеççе çÿренĕ, чылай кĕнекесене хăй вуласа кăтартнă. Кĕнекесен шучĕ те, вулакансен йышĕ те ÿссе пынă. Библиотекăна уйрăм пÿлĕме куçарнă.

Халĕ районти библиотекăн вуламалли зал, кĕнеке хранилищи пур. Унта—17 пин ытла кĕнеке. Илемлĕ литература кĕнекисемсĕр пуçне, марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсем, наукăпа техника, искусство тата ытти ыйтусемпе çырнă кĕнекесем те нумай.

Библиотека политкружоксенче тата агрозооветтехника кружокĕсенче вĕренекенсемпе вĕрентекенсене кирлĕ литература парса нумай пулăшать. Вăл куçса çÿрекен 16 пĕчĕк библиотека организациленĕ.

Чкалов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем хăйсен суйлав умĕнхи пухăвĕнче Артемьева юлташа Еççынни депутачĕсен район Советне депутата суйлама кандидата тăратрĕç.

— Е. А. Артемьева — халăх шанăçне тÿрре кăларма пултаракан, ĕçре мухтава тивĕçлĕ пулнă çын. Суйлавра хамăрăн сасăсене пурне те уншăн паратпăр,—терĕç Кукеç суйлав округĕнчи суйлавçăсем.

А. АЛЕКСЕЕВ.

Суйлавçăсем панă наказсем

КУСЛАВККА. Районти суйлав округĕсенче депутата суйлама тăратнă кандидатсем суйлавçăсемпе тĕл пулаççĕ.

Февралĕн 7-мĕшĕнче район Советне депутата суйлама тăратнă кандидат А. Соловьев юлташ Шăнчас округĕнчи суйлавçăсемпе тĕл пулчĕ.

Ялти шкул çуртне çынсем нумай пуханнă. Ял Совет председателĕ Н. Степанов юлташ суйлавçăсен пухăвне уçса, В. Демьянов доверенная сăмах пачĕ.

— А. Соловьев юлташа, терĕ довереннăй, эпир лайăх пĕлетпĕр. Вăл 30 çул пĕр таталмасăр совет органĕсенче ĕçлет. Халĕ вăл райсовет исполкомĕн председатель заместителĕ, район Совечĕн чи ватă депутачĕ.

Район Советне кăçалхипе нумай хут суйланакан А. Соловьев юлташ суйлавçăсене чĕререн тав турĕ, халăх шанса панă ĕçе малашне те тÿрĕ кăмăлпа туса пыма сăмах пачĕ.

Унтан чылай суйлавçăсем тухса каларĕç. Вĕсем коммунистсемпе партире тăманнисен сталинла блокĕн кандидачĕсемшĕн сасăлама кăмăл тунипе пĕрлех, райсовет исполкомĕн ĕçĕнчи пысăк çитменлĕхсене критиклерĕç, ĕçе лайăхлатма пулăшакан сĕнÿсем пачĕç.

— Районти çутĕç пайĕ,—терĕ С. Овчинников учитель,—кашни шкул ĕçне уйрăммăн тишкермест, шкулсен ыйтăвĕсене курмасть. Пирĕн шкулта классем çитмен пирки ачасене икĕ сменăпа вĕрентеççĕ. Çакă, паллах, шкул коллективĕн ĕçне йывăрлатать, вĕренÿ пахалăхне чакарать.

Вăл ялта пушă ларакан пысăк çурта шкул тума сĕнÿ парать.

Н. Степанов суйлавçă Шăнчаспа Маслă ялĕсем хушшинчи çырма урлă касса çÿреме кансĕрри çинчен, унта çĕнĕ кĕпер тума кирли çинчен каларĕ.

Суйлавçăсен пухăвĕ шкула пысăклатма тата çĕнĕ кĕпер тума йышăнчĕ. Çак ĕçсене тума район бюджетĕнчен укçа уйăрса пама ыйтрĕç.

Суйлавçăсем Шăнчас ялне йĕркелесе илемлетес тĕлĕшпе ял Советне нумай наказсем пачĕç.

Т. ИВАНОВ.
(Хамăр корр.).

Совет Правительствин ноти

Совет Союзĕн Израильри миссийĕн территорийĕнче бомба çурăлнă май Израиль правительствипе дипломатиллĕ çыхăнусем тытма пăрахасси çинчен

Февралĕн 9-мĕшĕнче ССР Союзĕн Израильри Миссийĕн территорийĕнче бомба çурăлнă, çав бомбăна усал ĕç тăвакансем, полици чарманнипе усă курса, хунă. Бомба çурăлнине пула К. В. Ершов Посланникăн арăмĕ, Мисси сотрудникĕн А. П. Сысоевăн арăмĕ тата Мисси сотрудникĕ И. Г. Гришин аманнă. Мисси çурчĕн пĕр пайĕ ишĕлнĕ.

Февралĕн 10-мĕшĕнче Израиль Президенчĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерстви Совет Союзĕн Миссине çырусем ярса панă. Унта вĕсем çулте асăннă усал ĕçе хăйсем сивлени çинчен пĕлтереççĕ тата Израиль Правительстви ячĕпе çавăншăн каçару ыйтаççĕ.

Анчах та Израиль Правительстви çакăн пек пĕлтерни тата каçару ыйтни нумай фактсемпе килĕшсе тăмасть. Совет Союзне курайман шухăш-кăмăла вăйлатнă тата ССР Союзне хирĕç тăшманла ĕçсем тума хĕтĕртнĕ çĕре Израиль Правительствин представителĕсем тÿрремĕнех хутшăнни çинчен калакан фактсем нумай.

Февралĕн 11-мĕшĕнче Совет Правительстви Израиль Правительствине çакăн пек нота ярса панă:

«Февралĕн 9-мĕшĕнче ССР Союзĕн Израильри Миссийĕн территорийĕнче бомба çурăлнă, çав бомбăна усал ĕç тăвакансем, полици чарманнипе усă курса, хунă. Бомба çурăлнине пула К. В. Ершов Посланникăн арăмĕ, Мисси сотрудникĕн А. П. Сысоевăн арăмĕ тата Мисси сотрудникĕ И. Г. Гришин аманнă. Взрыв пулнипе ССР Союзĕн Миссийĕн çурчĕн пĕр пайĕ çĕмĕрĕлнĕ.

Февралĕн 10-мĕшĕнче Израиль Президенчĕ тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министерстви ССР Союзĕн Миссине çырусем ярса панă. Çав çырусенче вĕсем усал ĕç пулнăшăн каçару ыйтаççĕ, Израиль Правительстви çак преступникла ĕçе сивлени çинчен, преступниксене шыраса тупас тата наказани парас тесе хăйсем мерăсем йышăнни çинчен пĕлтереççĕ.

Анчах та Совет Союзне курайман шухăш-кăмăла вăйлатнă тата Совет Союзне хирĕç тăшманла ĕçсем тума хĕтĕртнĕ çĕре Израиль Правительствин представителĕсем хутшăнни çинчен калакан фактсене пурте пĕлеççĕ. Израиль Правительстви Совет Союзĕн Миссийĕн территорийĕнче февралĕн 9-мĕшĕнче пулнă террористла акт çинчен заявлени туни тата каçару ыйтни, паллах ĕнтĕ, улталама хăтланни кăна пулать. Совет Союзне хирĕç тунă преступленин йĕрне пытарас тата çак усал ĕçшĕн Израиль Правительстви çинчен ответлăха сирсе ярас тĕллевпе çавăн пек тунă.

Израильре влаçра тăракан партисен хаçачĕсенче пичетленекен статьясем кăна мар, çав партисен представителĕсем тата Израиль Правительствин членĕсем парламентра тухса калакан сăмахсем те провокациллĕ шухăшлă. Вăл шутра кăçалхи январĕн 19-мĕшĕнче ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Шарет тухса каланине кĕртмелле. Шарет Совет Союзне хирĕç тăшманла ĕçсем тума уççăнах хĕтĕртнĕ.

Февралĕн 9-мĕшĕнче пулса иртнĕ террористла ĕç Израильре Совет Союзĕн представителĕсене дипломатиллĕ ĕçе йĕркеллĕ туса пыма условисем çуккине çирĕплетсе парать.

Çавăнпа та Совет Правительстви Совет Союзĕн Посланникне тата Израильри Совет Миссийĕн составне каялла чĕнсе илет, Израиль Правительствипе çыхăну тытма пăрахать.

Совет Правительстви çакăнпа пĕрлех Израильĕн Миссийĕ малалла Мускавра пурăнма пултарайманни çинчен пĕлтерет, Мисси персоналĕн пĕр тăхтаçа тăмасăр Совет Союзĕнчен тухса каймалла тесе требовани лартать».

Семинарсене ячĕ пултăр тесе ирттермелле мар

ВЛКСМ Елчĕк организацийĕн юлашки конференцийĕнче делегатсем райком секретарĕсене пуçламăш организаци секретарĕсен семинарĕсене ячĕшĕн кăна ирттернĕшĕн хытă критиклерĕç. Анчах ВЛКСМ райкомĕ конференци делегачĕсем кăтартса хăварнă йăнăшсене халĕ те тÿрлетмест.

Нумаях пулмасть ВЛКСМ райкомĕ пĕр кунлăх семинар ирттерме йышăннă. Ун çинчен комсомол организаци секретарĕсем патне хут ярса пачĕç. Унта вĕренÿ планне те кăтартса панă.

План тăрăх семинарта комсомол организацин ĕç планне тăвасси, комсомол организаци секретарĕсен обязанноçĕсем, комсомол комитечĕн ĕçĕ, комсомол пухăвĕсене хатĕрлесе ирттересси, финанспа учет ĕçне тытса пырасси тата ытти темăсем тăрăх лекцисемпе докладсем ирттерме палăртнă.

Паллах ĕнтĕ, кирек мĕнле çын та çĕнĕ ĕçе пуçăннă чухне ĕçе мĕнрен тытăнса пуçласа ярасси çинчен нумай шухăшлать. Çамрăк секретарьсем хумханса кĕтсе илчĕç семинар кунне. Анчах вĕсен савăнăçĕ çÿнсе ларчĕ.

Семинарăн малтанхи сехетĕнче ВЛКСМ райкомĕн пĕррремĕш секретарĕ «Пуçламăш комсомол организацийĕ — комсомолăн никĕсĕ» темăпа пĕр сехет лекци вуламаллаччĕ. Анчах та вăл лекцине пĕр сехет вырăнне 35 минут хушшинче вуласа пачĕ. Лекцие вара «Молодой большевик» журналăн 19-мĕш номерĕнчи «Комсомол организаци ĕçĕсене лайăхлатмалла» ятлă материала пĕр улăштармасăр, хамăр районти комсомол организаци ĕçĕн примерĕсемпе усă курмасăр вуласа пачĕ.

Ун хыççăн райком пайĕн заведующийĕн М. Краснов юлташăн комсомол организацийĕн ĕç планне мĕнле тумалла, комсомол пухăвĕсене мĕнле хатĕрленсе ирттермелле темăсем тăрăх икĕ сехетлĕ заняти ирттермеллечĕ. Анчах вăл трибуна патне çитсенех, çапла каларĕ:

— Эпĕ икĕ темипе мĕнле те пулсан кĕскен кăна чарăнса тăма тăрăшăп.

Чăнах та Краснов юлташ çавăн пек турĕ. Çапла вара семинарта 7 тема тăрăх лекцисемпе докладсем ирттермелле пулсан, 5 темипе кăна ирттерчĕç, 2 лекци пулмарĕ.

Семинара райком работникĕсем начар хатĕрленнĕ. Лекцисемпе докладсем начар. Çавна пула семинарта секретарьсем итлесе лармарĕç, пĕр-пĕринпе калаçса, пĕри теприн патне çырÿ çырса кулса ларчĕç.

Семинарта 34 колхозри пуçламăш комсомол организаци секретарĕсенчен 11 организаци секретарĕсем çеç пулчĕç.

— Паян килмен секретарьсене ыран пухатпăр, — терĕ райком секретарĕ А. Бобылева юлташ.

Тепĕр кунне, семинара килмен секретарьсене пухас тесе тем пекех тăрăшсан та, пурĕпĕх 5 колхозри комсомол организаци секретарĕсем анчах пухăнчĕç.

ВЛКСМ райкомĕ семинарсене ячĕ пултăр та шучĕ пултăр тесе кăна ирттерет.

И. НАУМОВ,
Елчĕк районĕнчи «Вперед» колхозри комсомол комитечĕн секретарĕ.

Пирвайхи çитĕнÿ

Çĕрпÿрен Шупашкара каякан автобус Кукеç тĕлне çитсен пĕр вăхăт хушши чарăнса тăчĕ. Хыр кĕреш-пĕрене тиенĕ вуншар лавсем пĕрин хыççăн тепри шоссе урлă йывăррăн шуса иртеççĕ те, çывăхри ял еннелле каяççĕ.

— Епле ĕçлеççĕ кунти колхозсем, — терĕ автобус çинче ларса пыракансенчен пĕри. — Государство валли вăрман хатĕрлемелли задание срокчен пурнăçларĕç те, авă, халĕ колхозри строительство валли материал турттараççĕ.

— Çапла, Шупашкар районĕ кăçал хытах тĕлĕнтерчĕ-ха вăл, — хутшăнчĕ тепĕр сасă.—Сулленех плана тултараймасăр юлаканччĕ, кăçал—республикăра чи малтан.

Районти колхозсем хăйсене панă задание срокчен тата ирттерсе пурнăçлани çинчен пĕлтернĕренпе чылай вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Коммунизмăн аслă стройкисем валли районти колхозсем планран ирттерсе февралĕн 5-мĕшĕ тĕлне 3.661 кубометр йывăç касса хатĕрленĕ, пин кубометра яхăн турттарнă, 1.190 кубометрне çул хĕррине кăларнă.

Коммунизм строительствин аслă задачисене пурнăçлассишĕн пыракан кĕрешÿре тунă кашни çитĕнÿ совет çыннисен чĕрине савăнăç туйăмĕ кÿрет. Шупашкар районĕнчи колхозниксем те Тăван çĕршыва нумайрах йывăç хатĕрлесе парасшăн сарăлнă кăмăлтура хăйсем мĕнле майпа мала тухни çинчен каласа параççĕ.

Тĕрлĕ çынпа калаçатăн, тĕрлĕрен сăмахпа ăнлантарса панине илтетĕн. Анчах пурте чи малтан çакна палăртаççĕ: коммунистсен партийĕн районти комитечĕ вăрман хатĕрлев планне срокчен тултарассишĕн кĕрешÿ колхозниксен анлă массисене мобилизацилеме тата çав кĕрешÿре пуçарса пыма ăсталăхпа вăй çитерме пултарнă.

Кĕркуннепе хĕллехи тапăхăта вăрман хатĕрлемелли задание ăнăçлăн пурнăçламалла тăвасси çинчен октябрь уйăхĕнчех райком пленумĕнче тĕплĕн сÿтсе явнă. «Государство планне срокчен тултарассишĕн пыракан кĕрешÿре коммунистсем чи малти ретре пулмалла» — çирĕп задача лартнă пленум. Çакăн хыççăн вăрман хатĕрлевне колхозсенчен 250 коммунист тухса кайнă.

Райком секретарĕ М. Зайцев юлташ хăйсен хастарлăхĕпе тата чăтăмлăхĕпе мĕнпур колхозниксене ĕçре хавхалантаракан вуншар коммунистсем çинчен каласа кăтартрĕ.

«Красный флот» колхозри пуçламăш парторганизаци секретарĕ И. Гаврилов юлташ бригадир тата вăрман касакан пулса кайнă. Унпа пĕрле 7 коммунист тата комсомолецсемпе партире тăман колхозниксем 20 çын ĕçленĕ. Пĕр бригадăра 8 коммунист—пысăк вăй. Вĕсем куллен хи нормăна чи малтан хăйсем ирттерсе тултарнă, ыттисене те çавăн пек ĕçлеме вĕрентнĕ. Коммунистсем кĕрешÿ организаторĕ пулнипе ĕнтĕ ку колхоз вăрман хатĕрлемелли плана декабрĕн 21-мĕшĕ тĕлне чылай ирттерсе тултарнă.

Крупская ячĕпе тăракан колхоз членĕсем пирвайхи кунсенче ыттисенчен нумайрах вăрман касса хатĕрленĕ, анчах турттарас енĕпе питĕ кая юлнă пулнă. Пуçламăш парторганизаци секретарĕ Т. Егоров юлташ 27 лавçăпа пĕрле хăй садовой пулса кайнă, çав условисенчех ĕç тухăçлăхне ÿстерме май пуррине хăй ĕçре кăтартса панă. Секретарь ертсе пыракан бригада 5—6 кун хушшинче татăклă улшăну тунă.

Райком секретарĕ Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Г. Павлов тата пуçламăш парторганизаци секретарĕ В. Димитриев юлташсем вăрман хатĕрлев планне срокчен тултарас ĕçре хăйĕх организаторсем пулнине палăртрĕ.

Павловпа Димитриев юлташсем—колхоза ертсе пырас ĕçри опытлă работниксем. Тăван çĕршыв валли вăрман хатĕрлемелли плана ку колхоз çулленех ăнăçлăн тултарса пырать.

— Пирĕн район хăйĕн планне республикăра чи малтан тултарни вăл парти райкомĕ ĕçе тĕрĕс организацилесе ертсе пыма пĕлнине лайăх кăтартса пачĕ,—терĕ Павлов юлташ.

— Сан шутпа хăш енчен?—ыйтрĕ парторганизаци секретарĕ.

— Юрать кун çинчен сăмах хускатмăмăр пулсан, каласăпăр,—терĕ председатель. — Иртнĕ çулта иксĕмĕре райком бюровĕнче сехет те 40 минут хушши пĕçертнине астăватăн-и?

— Пулнăччĕ, — килĕшрĕ секретарь.

— Çапла çав. Хамăра панă план тăрăх пирĕн 800 фестметр вăрман хатĕрлемеллеччĕ. Шутласа пăхаççĕ райкомпа райисполкомра — вăхăт иртет, анчах план ниепле те тулаймасть, хăшпĕр колхозсем çине нимĕн чухлĕ те шанма çук мĕн. Мĕн тăвас? «Малта пыраканнисене çĕнĕрен задани хушса парас». Вара пирĕн колхоза та 400 фестметр хушса пачĕç.

Пирваях ыттисенчен пысăкрах задани панипе килĕшме те пулать. Ирттерех çине тăрса ĕçлесен, пысăк план та ăнăçлăн пурнăçланать. Хĕл варринче е çуркунне çывхарса çитеспе çĕнĕрен задани хушса панăшăн çурăлас пек тарăхатăн. Хамăр плана тултарнă хыççăн колхозниксем киле таврăннăччĕ çеç, председательпе парторганизаци секретарьне бюроне чĕнсе илеççĕ. «Çапла та çапла, район планĕ пурнăçланаймасть, сирĕнтен тата çавăн чухлĕ фестметр вăрман хатĕрлесе пама ыйтатпăр», теççĕ. Ĕшенсе таврăннă çынсене 100—120 километрти вăрманпромхоза çитиччен каялла кăларса яма çăмăл-и вара?

«Пур колхозсем те плана тултарма тивĕç, малта пыракансен хыçĕнче пытанса юлакансен ан пулччăр», тенине эпир кашни çулах илтетпĕр. Анчах решенисем йышăннă та, ун хыççăн пур çынсем те вăрмана кар тăрса кайĕçĕ, тесе шанса тăнă. «Пирĕн вăй çитмест» тесе çăмăллăх кĕтсе ларма хăнăхнă председательсем, пĕчĕк плана тултарассинчен те пăрăнаççĕ, пĕр сăлтав хыççăн теприне тупаççĕ.

Кăçалхи сезонра парти райкомĕ вăрман хатĕрлевĕнче иртнĕ çулсенчи пек улачăла ĕçлессине тĕппипех пĕтерме задача лартрĕ. «Никама та çĕнĕрен задани хушса памастпăр, никамăнне те чакармастпăр», терĕ райком секретарĕ. Октябрь уйăхĕнчех пирĕн районтан вăрманта 700 çын ытла, вăл шутран виçĕ пайĕнчен пĕр пайĕ коммунистсем ĕçленине курсан, райком хăйĕн решенине çирĕппĕн пурнăçлама тытăннине ĕнентĕмĕр.

Хамăр колхоза панă задание тултарса таврăннă хыççăн, райком секретарĕ мана хăй патне чĕнсе илчĕ. «Çĕнĕ задани тыттарса ямăри-ха?» тесе шутлатăп хам ăшăмра.

— Государство планне срокчен тата ирттерсе тултартăр, ку вăл сире пысăк чыс кÿрет,—терĕ вăл. — Халĕ ĕнтĕ колхозри строительство валли материал хатĕрлесси çинчен шухăшлас пулать.

Ку сăмахах килĕшрĕ. Çур хĕле çитрĕмĕр, февраль уйăхĕ иртсен, йывăç нумаях хатĕрлесе ĕлкĕреймĕн. Эпĕ райком секретарьне хамăр колхозăн кăçалхи строительство планĕпе паллаштартăм. Эпир кăçал йывăçран тата саманран пин пуç чăх, 150 путек валли çĕнĕ витесем, икĕ кормокухня, типовăй сушилка, выльăх-чĕрлĕх пăхакансем валли общежити, транспорт инвентарĕсен сарайĕ тума йышăнтăмăр. 250 кубометр йывăç турттарса хутăмăр, тата çавăн чухлĕ хатĕрлемелле. Секретарь пирĕн вăйсемпе резервсене тĕплĕн шутласа пăхрĕ.

— Пысăк ĕç тăватăр эсир,—терĕ вăл. —Анчах пĕр колхозра кăна строительствăн пысăк планне пурнăçлани пĕтĕм район умĕнче тăракан задачăна татса параймĕ. Хăвăр та пĕлетĕр, пирĕн районти колхозсенче выльăх-чĕрлĕх витисем çителĕксĕр. Сталин ячĕпе тăракан колхозăн лайăх опытне пур колхозсене те çитермелле.

Пысăк обязательство илсе, эпир районти мĕнпур колхозсене строительство материалĕсем нумайрах хатĕрлеме, выльăх-чĕрлĕх валли лайăх витесем тума чĕнтĕмĕр. Нумай та вăхăт иртмерĕ темелле, районĕпе икĕ пин çурă кубометр йывăç турттарса хуни çинчен хыпар илтĕмĕр. Государство планне ирттерех тултарни колхоз хуçалăхне тĕреклетес ĕçри пысăк задачăсене татса парассипе тачăн çыхăнчĕ.

Парторганизаци секретарĕ колхоз председателĕн сăмахне тимлĕ итлерĕ, унтан васкамасăр каларĕ:

— Пирĕн кăçалхи çитĕнĕвĕн никĕсĕ вăл — эпир массăсене çавăрма пултарнинче. Массăсен организаторĕ пулас тесен, чи малтан, ĕçре пирĕн хамăрăн кăтартуллă пулмалла. Икĕ алăпа кĕсъене чиксе, аяккинчен агитаци туса тăракан çынна, вăл кирек кам пулсан та, колхозниксем хисеплемеççĕ те, итлемеççĕ те. Йĕпреç вăрманпромхозĕн участокĕнче пирĕнпе юнашар делянка çинче Октябрьски районĕнчи «Аниш» колхозран пынă бригада ĕçлерĕ. Бригадирĕ — вăйпитти арçын баракран тухса курмарĕ.

— Эпир—бригадирсем, пирĕн чи малтан хамăрăн ĕç нормине тултарса кăтартмалла,—тетĕп ăна. Кахал çине пăхса колхозникĕсем те шăла çыртса тарăхаççĕ.

— Хочу ĕçлеп, хочу нет,—терĕ вăл ман ыйтăва хирĕç. Паллах ĕнтĕ, çавнашкал çынна бригадир туса ярсан, план тулассине кĕтме çук.

Пирĕн райком пуçламăш парторганизаци секретарĕсене бригадир пулса кайма поручени пачĕ çеç мар, вĕсем мĕнле ĕçленине çирĕп тĕрĕслесе тăчĕ. «Çын чухлĕ ĕçлеме тăрăшмастăн пулсан — эсĕ парторганизаци секретарĕ пулма та тивĕçлĕ çын мар».

«Колхозниксен нушисемпе ыйтăвĕсене тивĕçтермелле», тесе эпир сахал мар калаçатпăр, решенисем те йышăнатпăр. Анчах колхозниксене инçетри вăрманпромхозсенче ĕçлеме янă чухне çавăн пек решенисем çинчен тăтăшах манса кайнă. Иртнĕ çулсенче куркаланă,—райкомран е райисполкомран янă работник вăрманта ĕçлекен колхозниксем патне çитет те, тÿрех ÿпкелешме, ятлаçма тытăнать: «Мĕншĕн начар ĕçлетĕр, плана тултармастăр?» Колхозниксем мĕнле условисенче пурăнни, мĕнле йывăрлăхсем тÿссе ирттерни ун пек работника питех интереслентермест те.

Кăçал эпир вăрманпромхоза çитсен пирвайхи кунсенчех колхозниксене тухăçлă ĕçлеме условисем туса пама тăрăшнине куртăмăр. Астăватăп, кĕркуннех райком секретарĕ вăрманпромхоза пычĕ те, чи малтан колхозниксем мĕнле условисенче пурăннине тата ĕçленине тĕрĕслерĕ. «Бараксенче таса-и, ăшă-и, мунча хутса кĕреççĕ-и, вĕсем касса хатĕрленĕ е турттарнă йывăçа тĕрĕс шутласа йышăнаççĕ-и?».

Кун хыççăн вăрман участокĕнчи работниксемпе колхозниксен пĕрлехи пухăвне ирттернĕ, вăрманта ĕçлекенсем валли лайăх условисем туса хунă.

...Райком секретарĕн М. Зайцев юлташăн кабинетĕнче виç-тăватă колхоз председателĕ лараççĕ. Секретарь вĕсене пысăк ыйту пирки каласса татăлма чĕннĕ. Кукеçри шкул валли çĕнĕрен çурт тума çак уйăхсенче пин кубометр йывăç турттарса хумалла. Зайцев юлташ колхоз председателĕсен татăклă сăмахне кĕтет.

— Инçетри вăрманпромхоза кайса нумай пин кубометр йывăç турттарма вăй çитертĕмĕр пулсан, çывăхри вăрмантан пĕр пин кубометр турттарас пирки нумай каласса тăмăпăр ĕнтĕ, Михаил Васильевич, — терĕç председательсем.

— Государство заданине хăйсен тăван ĕçĕ вырăнне хурса тăрăшакан çынсемпе тата пысăкрах задачăсене пурнăçлама пулать, — терĕ секретарь, чĕннĕ çынсене ăшшăн ăсатса.

Н. ВОЛКОВ.

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сем ТРАКТОРСЕМ ТАТА ВЕСЕНЧЕН КАКАРСА ĔÇЛЕМЕЛЛИ МАШИНĂСЕМ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА ТУЛТАРНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА

1953 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ тĕлне (процентпа)

МТС-сем	Тракторсем	Плугсем	Сеялкăсем	Культиваторсем
Йĕпреç	89,6	80,4	88,5	100
Сĕнтĕр	83,7	78,9	81,8	80
Çĕмĕрле	78	78,9	74,1	95,6
Пăрачкав	75,4	103,8	82,3	93,5
Элĕк	67,4	70,4	70	80
Кувакино	64,6	55,5	63,6	45,8
Комсомольски	63,3	89,1	95	89,1
Вăрнар	62,5	51,8	50	19
Шăмăршă	62,3	41,5	47,4	47,8
Чкаловски	62	57,1	93	64,1
Шăхасан	58,9	52,8	54,3	83,3
Вăрмар	58,3	43,8	69,5	37,7
Çĕрпӳ	57,9	56	71,4	68,4
Улатăр	57,8	67,2	57,1	72,7
Сурмайкан	57,1	61,4	50	70,6
Первомайски	56,4	70,8	63,9	61,4
Елчĕк	56,4	48,8	56,7	39,7
Октябрьски	53,2	61,9	55,5	44,4
Ишлей	52,4	67,5	80	77,8
Красноармейски	50,9	72,5	59,1	75
Сиява	50	59,4	80,9	111,7
Тăвай	48,5	58	71,4	64,8
Шупашкар	46,8	41,3	53,1	48,6
Канаш	46,1	41,9	45,2	60
Куславкка	46	65,9	65	70,3
Муркаш	45	60,5	52,5	62,5
Сĕнтĕрвăрри	44,4	46,4	55,5	36,3
Калинино	44,2	59,1	68,4	68,1
Етĕрне	43,7	65,8	46,6	53,6
Советски	39,3	45,4	100	100
Чурачăк	39,3	58,1	70	60,8
Хĕрлĕ Чутай	28,6	29,1	54,5	50

Машина-трактор паркĕ ӳсет

Муркаш машина-трактор станцийĕ çĕнĕ йышши хăватлă «ДТ-54» тракторсемпе, самоходнăй комбайнсемпе, сложнăй молотилкăсемпе, сеялкăсемпе, культиваторсемпе, автомашинăсемпе пуянланса пырать. Кăçал татах 10 «ДТ-54» маркăллă трактор, 8 самоходнăй комбайн, автомашинăсемпе бензовозсем, трактор сеялкисем, культиваторсем, силосорезкăсем, тата ытти ялхуçалăх машинисем нумай килмелле. МТС дирекцийĕ çĕнĕ техникăпа туллин усă курма кадрсем вĕрентсе хатĕрлет. МТС çумĕнчи трактористсен курсĕнче 20 колхозник вĕренет, вĕсене тракторпа ĕçлеме опытлă механизаторсем вĕрентеççĕ. Канашри тата Етĕрнери ялхуçалăхĕн механизаци шкулĕсенче трактор бригадисен бригадирĕ пулма 2 тракторист, «ДТ-54» тракторпа ĕçлеме 10 колхозник, самоходнăй комбайнсемпе ĕçлеме 8 колхозник вĕренеççĕ.

Иртнĕ çулсенче МТС территоринче 14 çурт, вăл шутран МТС кантурĕ, машинăсен сарайĕ, хваттерсемпе общежитисен çурчĕсем тата мунча туса лартнă.

1953 çулта икĕ хутлă клуб, тракторсем лартмалли 3 сарай, машинăсем юсамалли типовăй мастерской, рабочисемпе трактористсене пурăнма 2 общежити тума палăртнă.

1952 çулта машина-трактор станци «Красное Сормово», «Аврора» колхозсенчи ялхуçалăхĕпе фермăсенчи ĕçсене механизацилеме пулăшнă. Уй-хирсенчи ĕçсен планне 118 процент тултарнă. Кăçал колхозсенче ялхуçалăх ĕçĕсене МТС вăйĕпе 85 процент тума тата «Свобода», «Правда», «Сталинец», Энгельс ячĕпе тăракан колхозсенче çĕрĕçĕпе фермăри ĕçсене механизацилесе çитерме палăртнă.

Г. СЕМЕНОВ.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветра

Чăваш АССР-ĕнчи промышленность, транспорт, çыхăну тата суту-илӳ предприятийĕсем 1952 çулхи IV-мĕш кварталта социализмла ăмăртса ĕçленин итогĕсем çинчен

Чăваш АССР-ĕнчи промышленность, транспорт, çыхăну тата суту-илӳ предприятийĕсем 1952 çулхи IV-мĕш кварталта социализмла ăмăртса ĕçленин итогĕсене пăхса тухса, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсовет президиумĕ çапла йышăннă:

СОЮЗЛА МИНИСТЕРСТВĂСЕНЕ ПĂХĂНСА ТĂРАКАН ПРЕДПРИЯТИСЕМ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне **Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завода** памалла тунă (директор ĕçне вăхăтлăха туса тăраканĕ Буйволов юлташ, завком председателĕ Червяков юлташ). Çак завод IV-мĕш кварталта продукци туса кăлармалли плана пĕтĕмпе 112,3 процент тата çирĕплетнĕ изделисем тăрăх тултарнă. 1951 çулхи IV-мĕш кварталтипе танлаштарсан, 26,3 процент ытларах продукци туса кăларнă, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 5,8 процент, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетмелли плана 3,7 процент иртерсе тултарнă.

Шупашкарти пир-авăр комбиначĕ лайăх ĕçленине палăртнă.

ÇĂМĂЛ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне **Шупашкарти лента тĕртекен фабрикăрах** хăвармалла тунă (директорĕ Байков юлташ, фабком председателĕ Филиппов юлташ). Фабрика 1952 çулхи IV-мĕш кварталта продукци туса кăлармалли плана пĕтĕмпе 124,3 процент тата çирĕплетнĕ изделисем тăрăх тултарнă. 1951 çулхи IV-мĕш кварталтипе танлаштарсан, продукци 112,5 процент ытларах туса кăларнă, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 28,1 процент, продукцин хăйне ларакан хакне йӳнетмелли плана 1,1 процент иртерсе тултарнă.

АПАТ-ÇИМĔÇ ТАТА СĔТ-ÇУ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне сĕт-çу трестне пăхăнса тăракан **Шупашкар çу заводне** памалла тунă (директорĕ Чистиков юлташ, завком председателĕ Яковлев юлташ). Çак завод 1952 çулхи IV-мĕш кварталта продукци туса кăлармалли плана пĕтĕмпе 224,4 процент тултарнă, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 124 процент иртерсе тултарнă, продукцин хăйне ларакан хакне 1,8 процент йӳнетнĕ, планран иртерсе 9,4 пин тенкĕ перекетленĕ. Ку завод санитари тĕлĕшне те ыттисемшĕн кăтартуллă.

Шупашкарти сăра заводĕ тата Улатăрти аш-какай комбиначĕ лайăх ĕçленине палăртнă.

ВĂРМАН ПРОМЫШЛЕННОСĔПЕ ЙЫВĂÇ ЯПАЛАСЕМ ТĂВАКАН ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне Вырăнти топливо промышленность управленине пăхăнса тăракан **Çĕмĕрле вăрманпромхозне** памалла тунă (директорĕ Храмков юлташ, рабочком председателĕ Иваничев юлташ). Вăрманпромхоз 1952 çулхи IV-мĕш кварталти плана пĕтĕмпе 196 процент тата çирĕплетнĕ изделисем тăрăх тултарнă, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 109 процент тултарнă, продукцин хăйне ларакан хакне 9 процент чакарнă, социализмлă ăмăрту условийĕсен ытти кăтартăвĕсене те пурнăçланă.

РАЙОНСЕНЧИ ВЫРĂНТИ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне **Шуркасси райпромкомбиначĕнчех** хăвармалла тунă, (директорĕ Васильев юлташ, местком председателĕ Васильев юлташ). Райпромкомбинат 1952 çулхи IV-мĕш кварталта продукци туса кăлармалли плана 100 процент тултарнă, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 15 процент иртерсе тултарнă, продукцин хăйне ларакан хакне 1,8 процент вырăнне 2,7 процент чакарнă, тупăш илмелли плана иртерсе тултарнă.

Çĕрпӳ райпромкомбиначĕ тата Канаш хулинчи промкомбинат лайăх ĕçленине палăртнă.

РАЙОНСЕНЧИ АПАТ-ÇИМĔÇ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне **Калинино районĕнчи апат-çимĕç комбиначне** памалла тунă (директорĕ Малов юлташ, местком председателĕ Журавлев юлташ). Апат-çимĕç комбиначĕ IV-мĕш кварталти плана пĕтĕмпе 132,6 процент тата çирĕплетнĕ ассортимент тăрăх тултарнă, ĕç тухăçлăхне ӳстермелли плана 2 процент иртерсе тултарнă, таварлă продукцин хăйне ларакан хакне 11 процент чакарнă.

КОММУНАЛЬНĂЙ ХУÇАЛĂХ ПРЕДПРИЯТИЙĔСЕМ ЕНĔПЕ

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне **Атăл леш енчи электростанцирех** хăвармалла тунă (директорĕ Зубов юлташ, местком председателĕ Михайлов юлташ). Электростанци IV-мĕш кварталта электроэнерги туса кăлармалли плана 114,6 процент тултарнă, электроэнергин хăйне ларакан хакне 3 процент чакарнă, оборудованипе çуртсене тĕпрен юсамалли плана тултарнă, социализмлă ăмăрту условийĕсене пурне те пурнăçланă.

Çĕмĕрле хулинчи мунча тата Улатăрти строительствăпа ремонт кантурĕ лайăх ĕçленине палăртнă.

Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсовет 1952 çулхи IV-мĕш кварталта Шупашкарти ликерпа эрех заводĕ, Çĕрпӳри пир-авăр фабрики, «Чăвашлесдрев» трест, Улатăрти атă-пушмак фабрики, Ивановăри кирпĕч заводĕ çителĕксĕр ĕçленине палăртнă.

1952 çулхи IV-мĕш кварталта «Чăвашвăрман» треста, Вăрман хуçалăх управленине, Строительство материалĕсем тăвакан промышленность управленине пăхăнса тăракан предприятисем, çыхăну, суту-илӳ организацийĕсем тата столовăйсем социализмлă ăмăрту условийĕсене пурнăçламаннине шута илсе, асăннă предприятисене Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕпе Чăвашоблпрофсоветăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне никама та памалла мар тунă.

Малта пыракансемпе танлашмалла

ЙĔПРЕÇ. Районти колхозниксем ĕççынни депутачĕсен вырăнти Совечĕсен суйлавне ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемпе кĕтсе илеççĕ. «Путиловка» ялхуçалăх артелĕн членĕсем кăçалхи çуракине тĕплĕн хатĕрленсе иртерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ. Колхоз 11 тонна фосфорит çăнăхĕ, 20 тонна кали тăварĕ тата 44 тонна суперфосфат илсе килнĕ. Паянхи куна уя 3.600 лав тислĕк кăларнă, 152 центнер кĕл тата 120 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ, 200 гектар çинче юр тытнă. Колхозри бригадăсем хушшинче социализмлă ăмăртăва аван йĕркеленĕ. Ăмăртура Г. Николаев юлташ ертсе пыракан бригада малта пырать.

Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе «Большевик» колхоз членĕсем те паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вĕсем çак кунсенче вăрлăх тасатса пĕтереççĕ. Колхозри тимĕрçĕсем ялхуçалăх машинисем юсаççĕ. Колхоза уя тислĕк кăларас тĕлĕшпе Ф. Морковкин тракторист пысăк пулăшу парать. Вăл тракторпа кунсерен 7—8 тонна таран тислĕк турттарать.

Сталин ячĕпе тăракан колхозра та хĕрӳ ĕç пырать. Вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене тасатнă, акма юрăхлă кондицине çитернĕ. Çурхи тырă калчине апатлантарма пĕтĕмпе 74 тонна минераллă удобрени кӳрсе килнĕ. Уя 2 пин лав ытла тислĕк кăларнă. Ялхуçалăх машинисене суйлав кунĕ тĕлне юсаса пĕтереççĕ.

Анчах хăшпĕр колхозсем çуракине начар хатĕрленеççĕ. «Красный урожай», «Правда», «Гвардеец» колхозсем халĕ те аван çапса пĕтермен. «Трудовик», «Заря», Мичурин ячĕпе, Молотов ячĕпе тăракан колхозсенче хăшпĕр культурăсем тăрăх вăрлăх çитмест. Чылай колхозсенче вăрлăх тасатас ĕçе организацилемен. «Заря» колхозра 118 центнер вика акма юрăхсăра тухнă. Колхоз çуракине хатĕрленме тытăнманпа пĕрех. Минераллă удобренисем пĕр центнер та туянман. Çавăн пекех «Красный фронтовик» колхозра та çуракине хатĕрленни курăнмасть. Кунта сĕлĕ, урпа, пăрçа тата ытти вăрлăхсене тасатман.

Машина-трактор станцийĕ районти колхозсене хĕллехи агротехникăллă мероприятисене вăхăтра пурнăçлама çителĕксĕр пулăшать.

Н. ПАВЛОВ.
Г. РУСАНОВ.

Минераллă удобренисем туянаççĕ

ИШЛЕЙ. Районти колхозсем тырпул тухăçлăхне хăпартас ĕçре минераллă удобренисемпе ытларах усă курма пуçларĕç. 1948 çулта 75 тонна минераллă удобрени кӳрсе килнĕ пулсан, 1952 çулта районти колхозсем 1.626 тонна илсе килнĕ.

Кăçал районти колхозсем 3 пин тонна яхăн минераллă удобренисем кӳрсе килеççĕ. Вăл шутран январь уйăхĕнче кăна 600 тонна кӳрсе килнĕ. Карл Маркс ячĕпе тăракан, «Знамя труда», «Большевик» колхозсем иртнĕ çулсенче минераллă удобренисемпе пĕртте усă курман пулсан, кăçал вĕсем çĕршер тонна кӳрсе килеççĕ. Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз çак кунсенче 254 тонна, «За коммунизм» колхоз 80 тонна, «Коминтерн» колхоз 76 тонна, Ленин ячĕпе тăракан артель 50 тонна удобрени кӳрсе килчĕç.

Чылай колхозсем çĕре çемçетме вырăнтах торф нумай кăларса хатĕрлеççĕ. Ку ĕç уйрăмах «За коммунизм», Киров ячĕпе тăракан колхозсенче анлăн саралчĕ, вĕсем 100-шер тонна торф кăларса хатĕрленĕ.

В. ЧЕРНОВ.

Кино кăтартас ĕçе лайăхлатмалла

Февралĕн 9—10-мĕшĕсенче Шупашкарта районсенчи кинофикаци пайĕсен начальникĕсен канашлăвĕ пулчĕ. Канашлура халăха кино кăтартас ĕçе лайăхлатас тĕлĕшпе умра тăракан задачăсем çинчен Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи кинофикаци управленийĕн начальникĕ Г. Трофимов юлташ доклад туса пачĕ.

Докладчик тата прение тухса каланă юлташсем кино кăтартас ĕç республикăра мĕнле тăнине кăтартса пачĕç. Хуласенчи кинотеатрсем иртнĕ çулта кино кăтартмалли тата укçа пухмалли плана тултарнă. Çĕмĕрле районĕнчи кинофикаци пайĕ аван ĕçлет, кашни уйăхрах халăха кино кăтартмалли плана тултарать. Ку районта кинотеатрсемпе передвижкăсен ĕçне тĕрĕс йĕркеленĕ. Киномеханиксем улшăнмаççĕ. Вĕсем яланах пĕр кинотеатрта ĕçлеççĕ. Передвижкăсем кирек хăçан та хăйсене яланлăха çирĕплетсе панă ялсем тăрăх, расписанире палăртнă кун кино кăтартса çӳреççĕ. Пĕрмаях пĕр çĕрте ĕçленĕ пирки киномеханиксем аппаратсемпе автомашинăсене тирпейлĕ тытса усраççĕ, вĕсен аппарачĕсем кирек хăçан та юсавлă. Картинăсене курма халăх йышлă пухăнать. Районта 1952 çулта çĕнĕрен 13 механик вĕрентсе хатĕрленĕ.

Кинофикаци пайĕ халăха кино кăтартмалли плана вырăнти условисене тĕплĕн шута илсе тăвать, çав плана ял Совечĕсене, клубсемпе вулав çурчĕсен заведующийĕсене малтанах ярса парать. Хăш ялта хăçан тата мĕнле кинокартина кăтартасси çинчен пĕлтерекен афишăсене темиçе кун маларах çакса хураççĕ. Механиксем, кино куракансен сĕнĕвĕсене шута илсе, халăх ыйтакан картинăсене кăтартма тăрăшаççĕ.

Пирĕн республикăра кинотеатрсемпе кинопередвижкăсен шучĕ ӳссе пырать. Передвижкăсемпе туллин усă курсан, кашни ялтах уйăхра тăватă хутран кая мар кино кăтартма май пур. Анчах нумай районсенче аппаратсемпе туллин усă курмаççĕ. Республикăра, пĕтĕмĕшпе илсен, кино кăтартас ĕç питех те япăх тăрать, картинăсем кăтартмалли тата вĕсене курнăшăн укçа пухмалли план пурнăçланса пымасть. Ялсенчи кинотеатрсемпе передвижкăсем иртнĕ çулта картинăсем кăтартмалли плана 49,9 процент кăна тултарнă. Ку ĕçе Ишлей, Хĕрлĕ Чутай, Советски, Сĕнтĕр, Чурачăк, Елчĕк тата Тăвай районĕсенче уйрăмах питĕ начар организациленĕ. Çак районсенчи кинофикаци пайĕсен начальникĕсем ĕçшĕн ответлăха туймаççĕ, кинотеатрсемпе передвижкăсен ĕçне лайăхлатма тăрăшмаççĕ.

Ачасем валли ятарласа киносеанссем ирттермелле. Пур шкулсенче те кино кăтартас ĕçе йĕркелемелле. Вырсарникун тата праçник кунĕсенче ачасем валли киносеанссем ирттерес пулать.

Главкинопрокатăн Чăваш республикинчи кантурĕн фильмсен фондне пысăклатмалла. Унăн ĕлĕкрех кăларнă фильмсем те, фильмсен копийĕсем те ытларах пулмалла. Çав фонд пысăк пулни кино кăтартас ĕçе лайăхлатма пулăшĕччĕ.

Хăшпĕр районсенчи кинофикаци пайĕсен начальникĕсем тата кинотеатрсен директорĕсем репертуар енĕпе политикăна пăсаççĕ, идея тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра тăракан совет фильмĕсене кăтартас вырăнне содержани енчен нимĕ тăман, ют çĕршывсенче кăларнă фильмсене ытларах кăтартма хăтланаççĕ. Çакă вăл хăшпĕр работниксен политикăллă сисĕмлĕх çитменни çинчен калать.

Чăвашкиноремснаб мастерскойĕнче аппаратсене начар юсаççĕ. Унăн начальникĕ Решетовпа кинофикаци управленин эксплуатаци пайĕн начальникĕ Михайлов инженер аппаратсене юсас ĕçе лайăхлатма мерăсем йышăнмаççĕ.

Киноработниксем хушшинче дисциплина çирĕп мар. Хăшпĕр районсенчи кинофикаци пайĕсен начальникĕсемпе механиксем ĕç çине сиелтен пăхаççĕ. Киноработниксен ответлăхне ӳстерес пулать. Кадрсене политикăллă воспитани парас тата вĕсен квалификацине ӳстерес ĕçсене тĕпренех лайăхлатмалла.

Кувакино районĕнчи кинофикаци пайĕн начальникĕ Вареничко юлташ кинофикаци управленийĕн работникĕсем районсенче сахал пулнине, ĕçе лайăхлатма конкретлă пулăшу паманнине палăртрĕ.

Пăрачкав районĕнчи кинофикаци пайĕн начальникĕ Сульдин юлташ райисполком киноработниксене пачах пулăшманни, çак ĕçе хакламанни çинчен каларĕ.

— Пирĕн районти киномеханиксем хăйсен ĕçне начар пĕлеççĕ,— терĕ Вăрмар районĕнчи кинофикаци пайĕн начальникĕ Игнатьев юлташ,— анчах вĕсене техникăна вĕрентес ĕçе начар организациленĕ. Механиксем хăйсен ĕçне пĕлмен пирки аппаратсене çĕмĕреççĕ. Кинофикаци управленийĕн кадрсене вĕрентес ĕçе йĕркелеме пулăшас пулать.

Шупашкарти «Родина» кинотеатрăн технорукĕ Липатов юлташ районсенчи механиксем ĕçлеме пĕлмен пирки аппаратсем час-час пăсăлни çинчен, «Родина» кинотеатрăн директорĕ Перлов юлташ ĕç çине сиелтен пăхни, ответлăха туйманни çинчен, театра ăшăтманни, унта таса марри çинчен каласа пачĕ. Перлов театра курма пыракансене ытларах явăçтарма тăрăшмасть, работниксене час-час улăштарать, хăйĕн йĕркесĕрлĕхĕсене палăртакан çынсене ĕçрен кăларса ярать.

Прение политикăпа сутĕç учрежденийĕсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн обком председателĕ Чиркова, Куславкка районĕнчи кинофикаци пайĕн начальникĕ Тухланов, Главкинопрокатăн Чăваш республикинчи кантурĕн управляющийĕ Вишнев, Етĕрне районĕнчи кинофикаци пайĕн начальникĕ Готлиб, Чăвашкиноремснаб начальникĕ Решетов, Чурачăк районĕнчи кинофикаци пайĕн начальникĕ Сидоров, Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕн председателĕн заместителĕ М. Андреев юлташсем тата ыттисем те тухса каларĕç. Вĕсем пурте кино кăтартас ĕçе лайăхлатма кирлине палăртрĕç.

Ялти радиоузел тăрăх пулакан передачăсем

ВĂРНАР. Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозра вырăнти радиоузел тăрăх çамрăк суйлавçăсем валли ятарласа передачăсем пулаççĕ. Çак кунсенче Жовнер агитатор радио тăрăх пирĕн çĕршыври суйлав системи çинчен, Байбекова агитатор совет гражданĕсен прависемпе обязанноçĕсем çинчен паха лекцисем вуласа пачĕç.

Политика тата наука ыйтăвĕсем тăрăх, тĕнчери лару-тăру çинчен Нарышкин, Якушев, Степашин тата ытти агитаторсем те лекцисемпе докладсем туса панă. Радио тăрăх доверенăйĕсем те тухса калаççĕ. Вĕсем вырăнти Советсене депутата суйлама тăратнă кандидатсем çинчен каласа параççĕ.

Радиостудирен художествăллă пултарулăх коллективĕсем панă паха концертсене те час-часах итлеме пулать.

Н. ЛЕОНИДОВ.



Илемлĕ пысăк автобус тикĕс те яка çулпа малалла хăвăрт пырать. Диван пек çемçе пукансем çинче ларса пыракан пассажирсем хаваслăн калаçаççĕ.

— «Союзплодоовощь»,—тесе пĕлтерет кондуктор. Автобус чарăнать.

— Анăр, каçăн анмалла, пирĕн тата каймалла,—шӳтлет пĕр пассажирĕ.

— Эпир çитрĕмĕр. Пире автобус кил умнех илсе килет,—тет ачине яслирен илсе таврăнакан хĕрарăм.

Кунта анисем вырăнне çĕнĕ пассажирсем лараççĕ. Машина каллех малалла ыткăнать. Хирĕç килекен машинăсем вĕлтлетсе иртсе каяççĕ. Часах автобус 2—3 хутлă чул çуртсем умĕн иртсе автовокзал патне пырса чарăнать.

— Чапаевски поселок!—пĕлтерĕ кондуктор.

Кунта хула рабочийĕсем пурăнаççĕ. Ăна 1941 çулта кăна çак ята панă. Унччен çакăнта вăрман хĕртсĕ лартнă уйрăм бараксем ытларах пулнă. Çак поселокăн, унти çынсен паянхи пуян та культурăллă пурнăçне курсан, хальхи рабочисен поселокĕпе ĕлĕкхи поселоксем хушшинчи çав тери пысăк уйрăмлăха куратăн. Революцичченхи рабочисен поселокĕ çинчен паллă революционер И. В. Бабушкин çапла çырнă:

«Рабочисем ытла та тăвăр çуртсенче пурăнаççĕ. Кунти пек тăвăр пурăннине салтаксен казарминче те, больницăра та, тĕрмере те курма çук... Икĕ аршăн сарлакăш кутник сакки. Ăна сарлака хăма хурса картланă. Выртса тăма улăм тултарнă икĕ михĕ е çĕтĕк-çатăк. Ларма пукансем е тенкелĕсем çук. Кровать çине кăна ларса канма пулать. Çуртăн аялти хутĕнче пĕтĕм тасамарлăх, кунтах столовăй...»

Çавăн пек кашни поселокрах темиçешер хупах, усламçăсен пĕчĕк лавккисем пулнă. Вĕсенче пăсăлнă çимĕçсемпе хаклă таварсем кăна сутнă. Кашни поселокрах вара чиркӳ пулнă. Библиотекăсем, рабочисен клубĕсем, шкулсем, больницăсем, ача яслисем çинчен асăнма та пулман.

Кунĕпе йывăр ĕçре асапланса ывăннă рабочисем киле çитсенех хăйсен вырăнĕсем çине тĕшĕрĕлсе аннă. Вĕсем культурăллă канасси, вăхăта усăллă ирттересси, вĕренесси çинчен шухăшлама та пултарайман. Кăна тума поселокра нимĕнле условисем те пулман. Çавăнпа рабочисем заводри ĕç çине тĕрмери ĕç çине пăхнă пек пăхнă. Вăл вăхăтра урăхла пулма та пултарайман.

Хальхи рабочи поселок. Ăна ĕлĕкхи поселокпа танлаштарма та çук. Урамăн икĕ енĕпе темиçе хваттерлĕ çуртсем. Вĕсен пысăк чӳречисем хĕвел çутипе ялкăшса курăнаççĕ, эрешлесе тунă балконсем çуртсене илем кӳреççĕ. Кашни çурт умĕнче палисадник, сад пахчисем. Поселокăн пĕр вĕçĕнче çĕнĕ чул çурт купалаççĕ. Кунта та рабочисем пурăнмалла пулать. Çитес сывăх вăхăтсенче халĕ йывăç бараксенче пурăнакансене лайăх, пысăк та илемлĕ çуртсене пурăнма кӳсармалла. Кашни хваттерте Ильич ламписем çутатаççĕ.

Общежитисене кĕрсе пăхсан, чун савăнать. Таса та илемлĕ, çутă пӳлĕмсем. Кĕмĕл тĕслĕ кроватьсем çинче пружинăллă матрацсем. Сĕтелсем, чӳречесем çинче тĕрлĕ чечексем ешереççĕ. Кашни рабочи валли тумбочкăсемпе пукансем, общеставăллă вырăнсенче дивансем. Кунтах хаçат-журналсем килсе тăраççĕ. Ĕç хыççăн вăхăта культурăллă ирттерме кашни общежити çумĕнче хĕрлĕ кĕтессем тунă. Вĕсенче библиотекăсем, художествăллă пултарулăх кружокĕсем ĕçлеççĕ. Камăн кăмăлĕ ăçта туртать, унта вĕренме пултарать, пурнишĕн те çул уçă.

Йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерме рабочисен общежитийĕсенче уйрăм вухньăсем, прачечнăйсем, мастерскойсем, парикмахерскисем пур.

Çуртсем хушшинчи çулсене чул, гравий е урăх япаласем сарса хытарнă, çирĕплетнĕ. Поселокра спорт обществи валли пысăк та паха стадион тунă, хĕллехи вăхăтра каток тата спорт залĕ ĕçлет. Вĕсенче кулленех çамрăксем чылай пулаççĕ.

Шкул çулне çитнĕ ачасем пурте шкулта вĕренеççĕ. Кăçал вăтам шкултан 13 çамрăк вĕренсе тухмалла. Пĕлтĕр вĕренсе тухнисенчен чылайăшĕ аслă шкулсене вĕренме кĕнĕ. Рабочисен пĕлĕвне ӳстерес майпа кунта темиçе çул хушши çамрăк рабочисен вăтам шкулĕ ĕçлет. Кăçал унта çĕр çамрăк ытла вĕренет.

Поселокра ĕççыннисен сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе пур майсене те туса панă. Кунта 35 койка вырнаçмалăх больница пур. Ачасен, хĕрарăмсен консультацийĕсем, рентген кабинечĕ, васкавлă пулăшу тата ытти те пур. Вĕсенче пилĕк врач, вăтам медицина пĕлĕвĕ илнĕ вуншар работниксем ĕçлеççĕ.

Поселок çыннисен хăйсен кану вăхăтне культурăллă та усăллă ирттерме мĕн кирли çителĕклĕ. Вĕсем валли кунта темиçе библиотека уçнă. Пуринчен ытла поселок çыннисем республика 30 çул тултарнă ятпа тăракан клубпа мухтанаççĕ. Çак клуба культура двореце теме те юрать. Ун пек клуб республикăри хăш-пĕр хуласенче те çук-ха. Вăл поселокри чи пысăк та илемлĕ çуртра вырнаçнă. 450 çын вырнаçмалăх пысăк зал, кунтах сцена, ăна тĕксĕм хĕрлĕ бархатран тунă чаршав карса тăрать. Зала пысăк люстрăсем çине вырнаçтарнă электричество ламписем çутатаççĕ. Паркетран тунă урайне çемçе ковер сарнă, Маччапа стенасене архитектура тĕлĕшĕнчен илемлетсе тунă.

Ытти пӳлĕмсенче, фойере, вестибюльте—пур çĕрте те дивансем, çемçе пукансем. Клуб—поселокăн культурăллă центрĕ. Кунта пуян библиотека пур. Унта темиçе пин кĕнеке. Залра кашни каçах кино кăтартаççĕ, час-часах лекцисемпе докладсем пулаççĕ. Стахановецсен каçĕсенче уйрăм рабочисем хăйсен ĕç опычĕсем çинчен каласа параççĕ. Библиотекăра ĕçлекенсем вулакансен конференцийĕсене ирттереççĕ. Иртнĕ çулта «Совет çыннисен патриотизмĕ илемлĕ литературăра», «Совет çамрăкĕсен сăнарĕ» тата ытти темăсемпе те конференцисем ирттернĕ.

Клуб çумĕнче художествăллă пултарулăх кружокĕсем тунă. Драма, хор, хореографи, ал ĕç, духовой оркестр тата ытти тĕрлĕ кружоксем çĕршер çынна пĕрлештерсе тăраççĕ. Кружок занятийĕсене ирттерме ятарласа пӳлĕмсем уйăрнă.

Поселок çултан-çул пысăкланса, илемленсе пырать. Вырăнти Советсен иртнĕ суйлавĕ пулнăранпа кунта нумай хваттерлĕ икĕ хутлă чул çуртсем улттă туса пĕтернĕ. Поселок ӳссе пысăкланнине пула кăçал çĕнĕрен икĕ суйлав округĕ тунă. Поселок Совечĕ, партком библиотеки тата ытти хăшпĕр учрежденисем пысăк çуртсене куçнă. Юлашки икĕ çул хушшинче Чкалов, Куйбышев, Киров тата ытти урамсене илемлетме 20 пине яхăн йывăç лартнă, çулсене юсанă.

Кăçал кунта тата пысăкрах ĕçсем тума палăртнă. 16-шар хваттерлĕ виçĕ пысăк çурт туса пĕтермелле. Вăтам шкул валли çĕнĕ те пысăк çурт тăваççĕ. 50 койка вырнаçмалăх çĕнĕ больница тума палăртнă. Пасар вырăнне пысăклатса йĕркелеççĕ. Урамсене, тротуарсене, садсемпе парксене йĕркелес тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем тума палăртнă. Нумаях вăхăт иртмĕ, вăл хулапа çыхăнса унăн чи илемлĕ пайĕсенчен пĕри пулса тăрĕ.

Поселокпа пĕрлех унăн çыннисем те чылай ӳсрĕç. Вĕсем ĕçре, вĕренӳре хастарлă пулса, хăйсен производствăллă квалификацийĕсене, политикăллă пĕлĕвне нумай ӳстерчĕç.

Поселокри библиотекăн вуламалли залĕнче кассеренех çынсем нумай пулаççĕ. Камсем кăна çук унта. Рабочисем, учительсем, врачсем, килхуçи хĕрарăмĕсем, ваттисем е çамрăксем. Кашниех вĕренет. Библиотекăра 4.000 том кĕнеке ытла. Марксизм-ленинизм теорине вĕренекенсем валли пур условисем те çителĕклĕ. Уйрăм залра опытлă лекторсем час-часах лекцисем вуласа параççĕ, консультантсем ĕçлеççĕ.

— Пирĕн поселокра пурте вĕренме тăрăшаççĕ, кашниех мĕнле те пулин кружока е политшкула çырăнасшăн, — тет библиотека заведующийĕ Ваймуратова юлташ. Парти историне вĕренме кăна пилĕк кружок турăмăр. Унсăр пуçне, икĕ политшкул, философие вĕренмелли семинарсем ĕçлеççĕ. Халĕ кружоксемпе политшкулсенче партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене тата И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăллă проблемисем» произведенине вĕренеççĕ.

Марксизм-ленинизм теорийĕпе хĕçпăшалланнă май, чылай ĕççыннисем хăйсен вырăнĕсенче халиччен хичен лайăхрах ĕçлеççĕ. В. Осипов, Н. Матвеев, Н. Савенко производствăра стахановецсем шутланаççĕ. Вĕсем час-часах пухусенче докладсем туса параççĕ. Суваева, Фомина, Дорошин, Петрова, Скрипкова учительницăсем, Фомин фельдшер тата ыттисем те хăйсене шанса панă ĕçе чылай лайăхлатнă. Вĕсем—поселокри чи лайăх агитаторсем.

Халĕ поселокри ĕççыннисем поселок тата хула Совечĕсен депутачĕсене суйлама хатĕрленеççĕ. Депутата суйлама кунта чи ĕçчен çынсене кандидата тăратнă. Вĕсем хушшинче паллă стахановка Е. И. Иванова, поселокри больницăри главнăй врач В. А. Пчелкин, ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ И. А. Вдовичев, вăтам шкулти учительница Е. Г. Андреева тата ыттисем те.

Шупашкар хула Советне депутата суйлама тăратнă кандидатсем хушшинче паллă работница К. И. Ивановăпа М. Ф. Верентяева инженер, С. Н. Капрова врач, М. И. Горбунов платник пур. Пурте вĕсем— государство ĕçĕсене туса пыма пултаракан хастарлă çынсем. Халĕ поселокри агитпунктсенче коммунистсемпе партире тăманнисен Сталинла блок кандидачĕсемшĕн агитацилесси хĕрӳллĕн пырать. Кандидатсемшĕн агитацилесе вĕсем поселокри çынсем мĕнле пурăнни, ĕçлени çинчен, поселок çĕнелсе илемленсе пыни çинчен каласа параççĕ.

Н. МИНИН.

Венгрипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх

БУДАПЕШТ, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Венгрипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин Будапештри организацийĕн конференцийĕ пулса иртнĕ. Унта Обществăн иккĕмĕш съездне кайма делегатсем суйланă. Обществăн Будапештри организацийĕн секретарĕ Андраш Махан хăйĕн докладĕнче Венгри столицинчи ĕçсыннисем Совет Союзĕнчи пурнăçпа хытă интересленни çинчен, Венгрипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăха çирĕплетес тесе Венгрипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин Будапештри организацийĕ чылай ĕçсем туса ирттерни çинчен каласа панă. Венгрипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин пĕрремĕш съезчĕ пулнăранпа (1950 çулхи декабрь) столицăра Совет Союзĕ çинчен 15 пин лекци вуласа панă, вăл лекцисене 1.500 пин çын итленĕ. 550 пин çын ытла «Коммунизм стройкисем—мир стройкисем» тата «Коммунизм çулĕпе» ятлă выставкăсене пырса курнă.

Столицăри ĕçсыннисем вырăс чĕлхине вĕренме тăрăшаççĕ. Будапештра вырăс чĕлхине вĕренмелли курссем 1.850 яхăн уçнă. Вăл курссенче 21 пин çын вĕренет.

Будапештра Венгрипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин членĕсем 555 пин çын шутланаççĕ. Халĕ Венгрипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин столицăри организацийĕ Венгрипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхне ирттерме хатĕрленет. Уйăхлăх февралĕн 18-мĕшĕнче пуçланать. Февралĕн 13-мĕшĕнче—Совет Çарĕ Будапешта ирĕке кăларнăранпа 8 çул тултарнă кун—совет фильмĕсен фестивалĕ уçăлать.

АЛБАНИРИ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ СТРОИТЕЛЬСТВИ

ТИРАНА, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Албани Халăх Республикинче пилĕкçуллăхăн паллă объекчĕсене тăвас ĕç анлăн сарăлнă. Кăçал нумай паллă предприятисене сăмахран, Влора хулинчи цемент завочĕпе тацин фабрикине, Тирана хулинчи çăм чир-авăр тĕртекен фабрикăна ĕçе яма, Церрика хулинчи нефть тасатакан завода çуррине туса пĕтерме палăртнă. Энвер Ходжа ячĕпе тăракан гидроэлектростанцие тăвас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тăваççĕ. Нефть тасатакан заводăн коллективĕ нефтетара фабрики, насус станцийĕ, резервуарсем, вакуумнăй установкăсем тума тытăнать, Папер—Церрик хушшинче чугун çул хываççĕ. Рабочисен поселокĕнче çуртсем нумай тăваççĕ. Нормăсене ирттерсе тултарнăшăн 400 ытла рабочие стахановецпа ударник ятне панă. Ытти предприятисен строительствинче промышленность корпусĕсем, электростанцисем, складсем тата ытти çурт-йĕрсем тăваççĕ.

Хăшпĕр объектсенче оборудование вырнаçтарса лартма хатĕрленеççĕ. Энвер Ходжа ячĕпе тăракан ГЭС строителĕсем, «çутă çулне» ăнăçлăн хывнă тата чылай объектсене тунă хыççăн ГЭС пĕвине тума хатĕрленеççĕ.

Албани республикинчи строительсем совет халăхĕ тăванла пулăшнине туйса тăраççĕ. Совет Союзĕнчи инженерсемпе техниксем хăйсен Албанири тусĕсене пака опытпа паллаштараççĕ, канашсемпе кăтартусем параççĕ, хăйсен примĕрĕпе хавхалантарса пыраççĕ. Стройкăсене Совет Союзĕнчи çĕнĕ техника—экскаваторсем, транспортерсем, мотокрансем, тĕрлĕ механизмсем тата оборудовани вĕçĕмсĕр килсе тăрать.

Польшăри ĕçсыннисем вырăс чĕлхине вĕренеççĕ

ВАРШАВА, февралĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăх Обществин главнăй правленийĕ çумĕнче пĕтĕм Польшăри канашлу пулнă. Ăна вырăс чĕлхине вĕренес ыйтупа ирттернĕ. Канашлура палăртнă тăрăх, Польшăри общественноçăн анлă сийĕсем вырăс чĕлхине вĕренме тăрăшаççĕ. 1952 çулта çĕршывра вырăс чĕлхине вĕренмелли 7.367 курс ĕçленĕ. Вăл курссенче пĕрремĕш çулхи программа тăрăх 125 пин çынна яхăн вĕреннĕ. Унсăр пуçне çĕршывра иккĕмĕш çул вĕренмелли программа тăрăх 6 пин курс ĕçленĕ.

Вырăс чĕлхине вĕреннисенчен нумайăшĕ халĕ Совет Союзĕнчи политикăллă, илемлĕ тата техникăллă литературăна вулаççĕ. Пшеворск (Жешувск воеводстви) хулинчи кирпĕч заводĕнче вырăс чĕлхине вĕренмелли кружок организациленĕ. Çав кружокра вĕренекенсем Совет Союзĕнчи Лубанов стахановец кирпĕче мĕнле майпа хăвăрт хĕртмелли çинчен çырнă кĕнекене вуласа тухнă. Вĕсем хăйсен заводĕнче çав опытпа усă курма шутланă. Иртнĕ вăхăтра çак кивĕ завод нихçан та плана тултарса пыман. 1952 çулта вара завод плана 110 процент тултарнă, çĕр кăларăшĕ нумай перекетленĕ. Кросков хуйĕнче (Ольштынск воеводстви) вырăс чĕлхине вĕренекенсем Совет Союзĕнче агробиологи ыйтăвĕсем тăрăх кăларнă кĕнекесемпе паллашнă. Çавăн хыççăн совет наукин малта пыракан опычĕпе çĕ паракан культурăсем тата курăксем акнă çĕрте усă курнă. Кун пек тĕслĕхсем нумай илсе кăтартма пулать.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Халăх çарĕн соединенийĕсем тата Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем мĕнпур фронтсенче Америкăпа Англи интервенчĕсен тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç çапăçнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтакĕсем паян тăшманăн 3 самолетне персе ӳкернĕ, 5 самолетне сиенленĕ.

ПХЕНЬЯН, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: Корея Халăх çарĕн соединенийĕсем тата Китай халăх добровольцĕсен чаçĕсем мĕнпур фронтсенче Америкăпа Англи интервенчĕсен тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç артиллерирен персе тăнă. Фронтсенче паллă улшăнусем пулман.

Самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 2 самолетне персе ӳкернĕ.

Америка агрессорĕсем тыткăна лекнĕ çар çыннисем çине газ яраççĕ

ПЕКИН, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтерет:

Февралĕн 7-мĕшĕнче американецсем Корейăн тыткăна лекнĕ çар çыннисен Кочжедо утравĕ çинчи лагерĕнчи çар çыннисене вĕлерме наркăмăшлă газсемпе усă курнă. Тыткăна лекнĕ çар çыннисем Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарне тунăранпа 5 çул тултарнă ятпа юрăсем юрланă. Икĕ кун маларах американецсем тыткăна лекнĕ пĕр çынна персе вĕлернĕ.

Тыткăнри çар çыннисен лагерĕсен начальникĕ Кэдуэлл çапла пĕлтернĕ: наркăмăшлă газсемпе усă курни «хăйне тӳрре кăларать». Вăл çапла хушса хунă: «кун пек кирлĕ вăйпа» малашне те усă курмалла.

Паллă ĕнтĕ, юрă юрланăшăн американецсем тыткăнри çар çыннисене нумай вĕлернĕ, амантнă. Иртнĕ çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнче американецсем Чечжудо утравĕ çинче Китайăн 165 добровольцне вĕлернĕ тата амантнă. Вĕсем Китай Халăх Республикин вишĕ çул тултарнă ятпа юрăсем юрланă пулнă. 1951 çулхи августăн 15-мĕшĕнче американецсем Кочжедо утравĕ çинче тата Пусанра Корейăн тыткăнри 120 çыннине вĕлернĕ. Тыткăна лекнĕ çар çыннисем, хăйсен çĕршывне Япони захватчикĕсенчен ирĕке кăларнă куна паллă туса, юрăсем юрланă пулнă.

Тыткăна лекнĕ çар çыннисене Понган утравĕ çинче ушкăнпа вĕлернĕ хыççăн американецсен цензури тыткăна лекнĕ çар çыннисен лагерĕсенче тăвакан тискер ĕçсем çинчен пĕлтернисене хытă тĕрĕслесе тăма тытăннă. Анчах, американецсен пичетлесе кăларма тивнĕ сведенисем тăрăх, февралĕн пĕрремĕш эрнинче кăна американецсем тыткăна лекнĕ çар çыннисене 4 хутчен вĕлернĕ тата амантнă. Тыткăна лекнĕ çар çыннисем тĕлĕшпе çакăн пек тискер ĕçсем туни çакна çирĕплетсе парать: Кларк генералăн штабĕ пичетлесе кăларнă «разведка докладĕ» текенскер суя доклад пулса тăрать. Çав докладра Корейăпа Китайăн перемири çинчен Паньмыньчжонра калаçусем ирттерекен делегачĕсем çинчен элеклесе çырнă. Çак «докладăн» тĕллевĕ çакăн пек: Пĕрлешнĕ нацисен Генеральнăй Ассамблейин сессийĕ уçăлас умĕн перемири çинчен пыракан калаçусене тепĕр хут ирттерессине чарса лартмалла, Вашингтон хыççăн пыракан çĕршывсене Корейăри вăрçа тата ытларах хутшăнтармалла. Американецсем хальхи вăхăтра Корейăри вăрçа сарса яма хатĕрленеççĕ.

Бразили общественноçĕ Корейăна çарсем ярассине хирĕç тăрать

МОНТЕВИДЕО, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Бразилире Шатобрианăн хаçат тресчĕ тата Карлос Ласердăн «Ультима ора» ятлă хаçачĕ Бразили çарĕсене Корейăна ярассишĕн кампани пуçланă. Бразили общественноçĕ Бразили çарне Корейăна ярассине хирĕç татăклăн протестлет. Бразилири экспедици корпусĕнчи ватă салтаксене (ку корпус тĕнчери иккĕмĕш вăрçăра Италири çапăçусене хутшăннă) çак ирсĕр ĕçе хутшăнтарма хăтланни путланса ларнă.

«Коррейо да Манья» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Бразилири экспедици корпусĕнче пулнă çынсен Сан-Паулори ассоциацийĕн уйрăмĕ заявлени пичетлесе кăларнă. Çав заявленире Бразили çарĕсене Корейăна яма хатĕрленес тĕлĕшпе ирттерекен кирек мĕнле кампание те хутшăнассине хирĕç татăклăн протестленĕ.

США, ВЕЛИКОБРИТАНИ ТАТА ФРАНЦИ ПРЕДСТАВИТЕЛĔСЕМ АВСТРИ ЫЙТĂВĔ ПИРКИ ТĂВАТĂ ДЕРЖАВĂН КАНАШЛĂВНЕ ИРТТЕРМЕ ЧАРНĂ

ЛОНДОН, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Кăçалхи январĕн 27-мĕшĕнче Совет Правительстви Австрипе договор тăвас ыйту пирки США, Великобритани тата Франци правительствисене нотăсем пани çинчен пĕлтернĕччĕ ĕнтĕ. Çав нотăсенче Совет Правительстви Австрипе договор тăвас ыйту пирки тăватă держава представителĕсен канашлăвне хутшăнма хатĕрри çинчен тепĕр хут каланăччĕ. Çавăнпа пĕрлех Совет Правительстви малтанлăха вишĕ держава правительствисенчен «кĕскетнĕ договор» çинчен кăларса тăратнă сĕнĕвве пăрахăçлама тата Австрипе тумалли государство договорне пăхса тухас ĕçе туса çитерме, çапла вара тепĕр хут ирĕклĕ те никама пăхăнман Австри тума пулăшма пулса илнĕ обязательствăсене пурнăçлама хатĕр пулни çинчен пĕлме кирлĕ тесе шутланă.

Январĕн 29-мĕшĕнче, США, Великобритани тата Франци Правительствисем çапла пĕлтернĕ: вĕсем çулте асăннă канашлура çак договорпа çыхăннă мĕнпур ыйтусене сӳтсе явма сĕнеççĕ.

Февралĕн 3-мĕшĕнче Совет Союзĕн Лондонри Послĕ А. А. Громыко Великобританин Ют çĕршыв ĕçĕсен министерствине çапла пĕлтернĕ: вăл тăватă держава канашлăвне хутшăнма Совет Правительствинчен полномочи илнĕ. Çавна май, «кĕскетнĕ договорăн» проекчĕ канашлура сӳтсе явмалли ыйту пулса тăманнине асра тытмалла. Мĕншĕн тесен çак проект Австри ыйтăвне татса парас тата Австрипе тумалли договора хатĕрлессине вĕçлес тĕллев тытма пултараймасть.

Австрипе договор тăвас ыйту пирки февралĕн 6-мĕшĕнче Лондонра СССР, США, Великобритани тата Франци представителĕсен канашлăвĕ уçăлнă. Анчах тепĕр ларурах США, Великобритани тата Франци представителĕсем «кĕскетнĕ договор» текенскерĕ çинчен тунă хăйсен проектне пăрахăçлама тата Австрипе тумалли государство договорĕн проекчĕн калаçса татăлман статьисене сӳтсе явма килĕшмен. Вĕсем канашлăва ирттерме паллă мар вăхăтчен тăхтама сĕнӳ панă.

Çапла майпа, США, Великобритани тата Франци правительствисем Австрипе тумалли государство договорĕ хатĕрлес ĕçе вĕçлеме чарса лартнă.

Халăх массисем хĕснине пула

Франци министрĕ отставкăна тухнă

ПАРИЖ, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Парижри пур хаçатсем те çапла пĕлтереççĕ: сывлăх министрĕн, петэновец пулнă Андрэ Бутемин, гитлерла оккупаци вăхăтĕнче Франци патриочĕсене асаплантарнă çĕре хутшăннăскерĕн, отставкăна тухмалла пулнă.

Маларах çапла пĕлтернĕччĕ: депутат Жан Пронто коммунист «Бутеми правительство ĕçне хутшăннă хыççăн тухса тăнă киревсĕр лару-тăрăва пĕтерес тесе, правительство мĕнле мерăсем йышăнма шутлани», çинчен ыйтнине Наци пухăвĕ сӳтсе явма йышăннă. Пронто лартнă ыйтăва сӳтсе явассишĕн 340 сасă пулнă, 209 çын хирĕç сасăланă. Асăннă ыйтăва февралĕн 17-мĕшĕнче сӳтсе явмалла пулнă. Анчах Бутеми ĕçĕ правительство кризисĕ патне илсе çитерме пултарассинчен хăраса, влаçра тăракан ушкăнсем Бутемине, вăл февралĕн 17-мĕшĕччен «ирĕклĕн» отставкăна тухтăр, тесе сĕнӳ панă.

Çак событи çинчен асăнса, Андре Стиль «Юманите» хаçатăн умстатьинче çакна палăртать: министр-петэновеца отставкăна кăларма правительствăна Франци халăхĕ хушнă. Францири Коммунистсен партийĕ Бутемине тăрă шыв çине кăларнă, ăна правительствăран хăваласа кăларма требовани лартнă. Франци халăхĕ Коммунистсен партийĕн требованийĕ майлă пулнă.

Буржуаллă хаçат «Фрэн-тирер» çапла çырать: «Мейер сывлăх министрне шелленĕ пулсан, Наци пухăвĕ февралĕн 17-мĕшĕнче правительствăна шеллемен пулĕччĕ».

АМЕРИКА САЛТАКĔСЕМПЕ ХĔВЕЛАНĂÇ БЕРЛИНРИ ПОЛИЦЕЙСКИСЕН ПРОВОКАЦИЙĔ

БЕРЛИН, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). «Нейес Дейчланд» хаçат çапла пĕлтерет: Американ Хĕвеланăç Берлинри комендатури приказĕ тăрăх, ĕнер Потсдамер-плац-Штреземанштрассе районĕнчи оккупаци секторĕсем хушшинчи чикĕре провокаци тунă. Автоматсемпе тата винтовкăсемпе хĕçпăшалланнă салтаксем Хĕвеланăç Берлинри полицейскисемпе пĕрле ним сăлтавсăрах тата пачах законсăр йĕркепе оккупаци секторĕсем хушшинчи чикĕ паллисене урăх вырăна куçарнă.

Совет Союзĕн Израильри миссийĕн территорийĕнче бомба çурăлнă

ТЕЛЬ-АВИВ, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Усал ĕç тăвакансем, полици чарманнипе усă курса, февралĕн 9-мĕшĕнче Совет Союзĕн Израильри миссине хирĕç террорла ĕç тунă. Çав кун 22 сехет те 35 минутра Совет Союзĕн Израильри миссийĕн территорийĕнче бомба çурăлнă, вăл бомбăна преступниксем хунă пулнă. Бомба çурăлнине пула К. В. Ершов посланникăн арăмĕ, Мисси сотрудникĕн А. П. Сысоевăн арăмĕ тата Мисси сотрудникĕ И. Г. Гришин аманнă. Мисси çуртĕн пĕр пайĕ ишĕлнĕ.

Çакна палăртмалла: çак ирсĕр преступлени пуличчен Совет Союзне хирĕç чарусăр, элеклĕ кампани ирттернĕ. Вăл кампание Израильри официальнăй çынсем те хутшăннă. Çав çынсем Совет Союзне хирĕç тата Совет Союзĕн Израильри дипломатиллĕ Миссине хирĕç тăшманла ĕçсем тума уççăнах хĕтĕртсе тăнă.

Англири горняксен забастовкисем

ЛОНДОН, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем пĕлтернĕ тăрăх, 4.800 шахтер забастовка тунине пула февралĕн 9-мĕшĕнче Йоркширти икĕ шахта ĕçлеме чарăннă. Ротеремри шахтăсенчен пĕринче 3 пин шахтер ĕçлеме пăрахнă. Вĕсем 28 рабочие ĕçрен кăларса янине хирĕç протестлеççĕ.

Мексборо çывăхĕнчи Денби шахтинчи çĕр çинче ĕçлекен рабочисем ĕç укçи ӳстерме требовани лартса забастовка пуçланă.

Англире ĕçсĕрлĕх ӳсет

ЛОНДОН, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕçлĕх министерстви пичетлесе кăларнă сведенисем тăрăх, Англире ĕç тупайманнисен хисепĕ иртнĕ çулта 101.000 çын чухлĕ ӳснĕ.

Çав сведенисем тăрăх, гражданла ĕçре (промышленноçпа суту-илӳре) ĕçлекенсен хисепĕ 1952 çулта 142 пин çын чакнă, хĕçпăшаллă вăйсен личнăй составĕн хисепĕ вара 20 пин çын чухлĕ ӳснĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 10-мĕшĕ. (ТАСС). Коммунистсен партийĕн Шотландири организацийĕн секретарĕ Уильям Локлен çакăн пек сĕнӳ панă: Шотландири округсенчен суйланнă парламент членĕсен пĕрле пухăнса ĕçсĕрлĕх ыйтăвĕ çинчен сӳтсе явмалла. Ĕçсĕрлĕх ыйтăвĕ кунтан-кун çивĕчленсе пырать.

Хĕвелтухăçĕпе Хĕвеланăçĕ хушшинче суту-илӳ чакни, тенĕ Локлен, Шотландишĕн йывăрлăх кăларса тăратать. Шотланди промышленноçĕ, тĕпрен илсен, ют çĕршыва тавар янипе тытăнса тăрать. Рыноксем чакни малашне те ĕç тупайманнисен хисепĕ ӳссе пырас хăрушлăх кăларса тăратать.

Италири горняксен çĕнтерĕвĕ

РИМ, февралĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). «Унита» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Люнири горняксем, шахтăна хупнине хирĕç протестлесе 19 кун каярах шахтăна аннăскерсем, çĕнтерӳ тунă. Промышленность министрĕ шахта хуçисене шахтăна ĕçе ярас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнма хушнă. Шахта хуçисем çав ĕçсене туса ирттермесен, вĕсен шахтерсене ĕçлемен вăхăтшăн кунĕ сиене тӳлемелле, шахтăсене ун чухне шахтерсен кооперативĕн аллине параççĕ.

Шахтерсем çакăн пек çитĕнĕве, полици хăратнине тата хĕсĕрленине пăхмасăр, çине тăрса кĕрешнине пула тума пултарнă. Пĕтĕм Италири ĕç конфедерацийĕн секретарĕ Битосси правительство умне ятарласа ыйту лартнă. Шахтерсем çитĕнӳ тăвасси Битосси хутшăннинчен те килнĕ.

АВСТРИ ХĔВЕЛАНĂÇ ГЕРМАНИЕ ХĔÇПĂШАЛЛАНТАРМА ЭЛЕКТРОЭНЕРГИ ПАРАТЬ

ВЕНА, февралĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Австрири социалистсен партийĕн пичет служби пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Австри Баварие электроэнерги парса тăрасси çинчен килĕшӳ тунă.

Çак килĕшӳ тăрăх, Австри тăватă çул хушшинче Бавари промышленноçĕ валли электроэнерги парса тăмалла.

Çак килĕшӳ пирки демократиллĕ хаçатсем çапла çыраççĕ: Австрире электроэнерги ахаль те çитмест, анчах Фигль-Шерф правительстви Хĕвеланăç Германин пĕр пайĕнчи çар промышленноçне электроэнерги парса тăрать.

БРАЗИЛИРЕ ПОЛИЦИ ИРТĔХЕТ

НЬЮ-ЙОРК, февралĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Рио-де-Жанейро хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Бразилин юстици министрĕ Неграо де Лима полицие пĕтĕм çĕршывра миршĕн тăракансен кирек мĕнле пухăвĕсене те ирттерме чарма хушнă. Корреспондент çакна кăтартса парать: Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Бразили хушшинче çар килĕшĕвĕ тунине хирĕç халăхсем хытă протестленĕ хыççăн çавăн пек тума йышăннă. Правительство çав килĕшӳ çине алă пуснă. Халĕ вăл килĕшĕве конгресра сӳтсе яваççĕ.

Спорт обществисен командисем хоккей вăййипе республикăра мала тухассишĕн ăмăртса выляççĕ. Ăмăртура «Динамо» спорт обществи малта пырать.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Шупашкарти «Молния» спорт обществин катокĕ çинче «Молния» тата «Динамо» командисем хоккейла выляççĕ.
Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Йĕлтĕрпе ярăнса мала тухассишĕн

Февралĕн 8—9-мĕшĕсенче учительсен Атăл леш енчи канмалли çуртĕ патĕнче йĕлтĕрпе ярăнса Шупашкарта мала тухассишĕн ăмăрту пулса иртрĕ. Ăмăртăва спорт обществисенчен 30 коллектив хутшăнчĕ.

Хĕрарăмсем вишĕ километр ăмăртса чупнă чухне Горянкина юлташ мала тухрĕ. Вăл çак дистанцие 18 минут та 33 секундра чупса тухрĕ. Иккĕмĕш вырăна Захарова, виççĕмĕш вырăна Смирнова юлташсем йышăнчĕç.

Пилĕк километра хăвăрт чупса тухассишĕн кĕрешӳ питĕ вăйлă пулчĕ. Çак дистанцие «Молния» спорт обществин членĕ Токарева спортсменка пуринчен хăвăрт чупса тухрĕ. Иккĕмĕш вырăнта Емельянова (çав обществăранах). Сакăр километра Емельянова спортсменка 45 минут та 31 секундра чупса тухрĕ, пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.

Арçынсенчен вунă километра пуринчен малтан типографи коллективĕн представителĕ Кутузов спортсмен хăвăрт чупса тухрĕ, пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ. Ялхуçалăх институчĕн представителĕ Васильев иккĕмĕш вырăна, Крупин («Молния») виççĕмĕш вырăна тухрĕç.

18 километра ăмăртса чупасси те питĕ ăнăçлă иртрĕ. Чылай спортсменсем çак дистанцие хăвăрт чупса тухса лайăх тĕслĕх кăтартассишĕн кĕрешрĕç. Гаврилов спортсмен ку дистанцие 1 сехет те 23 минут та 55 секундра чупса тухрĕ, пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.

30 километра ăмăртса чупма чылай çамрăксем старта тухрĕç. Малти вырăна тухассишĕн кĕрешӳ питĕ вăйлă пулчĕ. «Молния» спорт обществин представителĕ Реуцкий çак дистанцие пуринчен хăвăрт чупса тухрĕ.

Слалом меслечĕпе ярăнса «Динамо» спорт обществин представителĕ Мочалов, хĕрарăмсенчен Биктимирова малти вырăна тухрĕç. Трамплин çинчен сиксе Николаев («Искра») пĕрремĕш вырăн йышăнчĕ.

Командăсенчен пĕрремĕш ушкăн енĕпе Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ завод коллективĕн команди пĕрремĕш вырăна, иккĕмĕш вырăна Чапаевски поселок команди йышăнчĕç. Ялхуçалăх институчĕн коллективĕ виççĕмĕш вырăна тухрĕ. Иккĕмĕш ушкăн енĕпе пир-авăр техникумĕн коллективĕ, виççĕмĕш ушкăн енĕпе пир-авăр фабрикин коллективĕ малти вырăнсене йышăнчĕç.

Мала тухнă командăсемпе уйрăм спортсменсене грамотăсемпе парнесем панă.

Н. ХОРЬКОВ.

Конькипе хăвăрт чупакансен республикăри ăмăртăвĕ

Февралĕн 8—9-мĕшĕсенче Шупашкарта конькипе хăвăрт чупакансен ăмăртăвĕ пулчĕ. Арçынсем 500, 1.500, 5.000 метр тата 10.000 метр, хĕрарăмсем—500, 1.000, 3.000 метр тата 5.000 метр ăмăртса чупрĕç.

Çак ăмăрту çамрăк спортсменсен пултарулăхĕ ӳссе пынине кăтартрĕ. Чăвашпединститут студенчĕ Родионов, Шупашкарти пир-авăр фабрикинче ĕçлекен Полякова, Шупашкарти 4-мĕш номерлĕ вăтам шкулта вĕренекен Дубровин тата çавăн пекех Львов (Куславкка районĕ), Протопопова (Çĕрпӳ хули) тĕрлĕ дистанцисене ăмăртса чупнă чухне республикăшăн 9 çĕнĕ рекорд турĕç.

Конькипе хăвăрт чупакансен ăмăртăвне вишĕ ушкăн—хуласем, районсем тата ирĕклĕ спорт обществисем енĕпе ирттернĕ. Ирĕклĕ спорт обществисен командисем енĕпе пĕрремĕш вырăна «Искра», иккĕмĕш вырăна—«Спартак», виççĕмĕш вырăна—«Красная звезда» командисем тухнă.

Хуласенчи командăсенчен Шупашкар хули команди мала тухнă. Иккĕмĕш вырăна Улатăр, виççĕмĕш вырăна—Сĕмĕрле хули йышăннă.

Районсене илсен Шупашкар районĕнчи конькипе чупакансен команди мала тухнă.

Кĕскен

★ ВĂРНАР. «Большевик» колхоз членĕсем, çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешсе, уй-хире юр нумай тытса хăвараççĕ. Кăçал планна 160 гектар çинче юр тытмалла пулсан, 203 гектар çинче юр тытнă. Халĕ колхозниксем ялхуçалăх машинисем юсаççĕ, вăрлăх хатĕрлеççĕ.

И. КОРАКОВ.

★ ШĂХАСАН. Ушанарти, Шĕкĕрти, Çĕнĕ Чалкассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулсенчи йĕлтĕрçĕсен ăмăртăвĕ пулчĕ. Унта 100 ача хутшăнчĕ. Ушанарти çичĕ çул вĕренмелли шкулти йĕлтĕрçĕсем пĕрремĕш вырăн йышăнчĕç.

Вишĕ шкулти пионерсенчен 88 ача БГТО нормине пачĕç.

Г. ЛУЧ.

★ ÇĔМĔРЛЕ. «Заря» колхозри пулăшу кассин вăйланса пырать. Халĕ пулăшу кассин фондĕнче 4,5 тонна тырă, тата тăватă пин тенкĕ ытла укçа пур. Кăçал колхоз касса фондне тата пĕр тонна тырă уйăрса пачĕ.

Пулăшу касси тăлăх ачасем шкула йĕркеллĕ çӳреччĕр тесе тăрăшать, вĕсене тумтир илсе парать. Тăлăх ачасем пурте шкулта вĕренеççĕ.

В. АЛЬЦЕВ.

★ ЧКАЛОВСКИ. Патăрьелĕнчи МТС-ра тракторсемпе комбайнсен хисепĕ ӳссех пырать. Вĕсемпе ĕçлеме кадрсем вĕрентсе хатĕрлеме трактористсен вишĕ уйăхлăх курсне организациленĕ. Унта 40 çамрăк вĕренет. Пулас трактористсем тракторпа ĕçлеме, ялхуçалăх машинисене, агротехникăна вĕренеççĕ. Кашни эрнере пĕр хут политзаняти пулать.

И. МАТРОСОВ.

★ СОВЕТСКИ Районти перекет кассисем хушшинчи социализмлă ăмăртура Мăн Чурашри перекет касси уйрăмĕ малта пырать. Вăл иртнĕ çулхи задание пур енĕпе те 180 процент пурнăçланă. Кăçалхи январь уйăхĕнче çĕнĕрен 67 вкладчик хутшăннă. Пĕр уйăх хушшинче перекет касси пĕрремĕш квартал планне 100,5 процент тултарнă.

В. ПЕТРОВ.

Кĕнеке нумай туяннă

ПАРАЧКАВ. Кунти кĕнеке магазинĕнче ĕçлекенсем вырăнти Советсен суйлав кунĕ ячĕпе социализмлă ăмăртăва тухса, хăйсем çине пысăк обязательствăсем илчĕç. Вĕсем кĕнеке сутмалли плана ирттерсе тултарма пулчĕç.

Кĕнеке магазинĕнче ĕçлекенсем январь уйăхĕнчи плана 170 процент тултарчĕç. Юлашки кунсенче кĕнеке магазинне суйлав литературипе тĕрлĕ плакатсем, нагляднăй пособисем нумай илсе килчĕç. Çак кунсенче литература 10 пин тенкĕлĕх ытла сутнă. Магазин коллективĕ суйлав кунĕ тĕлне февраль уйăхĕнчи плана ирттерсе тултарассишĕн кĕрешет.

В. ТОНЫШЕВ.

Пĕлтерни

Февралĕн 13-мĕшĕнче 20 сехетре, партин хула комитечĕн библиотеки çуртĕнче пĕрремĕш тата иккĕмĕш çул парти историне вĕренекен кружоксен руководителĕсен семинарĕ пулать. Тема: «Коммунистсен партийĕ—совет обществин ертсе пыракан вăйĕ, ССР Союзĕнчи коммунизм строительствин организаторĕ тата хавхалантараканĕ».

Семинара КПСС хула комитечĕн лекторĕ Л. Д. Эльбов юлташ ирттерет.

КПСС ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редакторшăн М. Н. ЯКИМОВ.

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ
Паян, февралĕн 13-мĕшĕнче, вырăсла спектакль «НЕВОЛЬНИЦЫ»
Ыран, февралĕн 14-мĕшĕнче, чăвашла спектакль «НАРСПИ»
Спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—8-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-28, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-27, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-81, çырусен пайĕ 7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 00992 Типографи №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.